Çу-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
МАРТ
2
ВЫРСАРНИКУН
51 (5766) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАСАЧĔ.

ПОТРЕБКООПЕРАЦИНЧИ ОТЧЕТПА СУЙЛАВ КАМПАНИЙĔ

Потребкооперацинчи управлени тата контроль органĕсен отчетпа суйлав кампанийĕ пуçланни пĕр эрне ытла. Кампани апрелĕн 1-мĕшĕнчен пырать.

Сельпосен тата райпотребсоюзсен управленине контроль органĕсен отчетпа суйлав кампанийĕ — потребкооперацин ĕçĕнче ответлă тапхăр пулса тăрать. Отчетсемпе суйлавсене иртерни потребкооперацин органĕсене пайщиксен йышлă массине таччăн çыхăнса ĕçлеме, управленине контроль органĕсен ĕçне çĕнĕ çынсене, сутуилӳри малта пыракансене ытларах хутшăнтарма, сельпосен тата райпотребсоюзсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене хăвăртрах тата хăюллăнрах пĕтерсе пыма пулăшать.

Ленин — Сталин партийĕ тата Совет правительстви потребкооперацине кулленех пулăшса пыраççĕ, суту-илӳ ĕçне лайăхлатассишĕн ырми-канмăл ĕçлеççĕ. СССР Совнаркомĕ тата ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1939 çулти январĕн 25-мĕшĕнче «Потребитель кооперацин ĕçĕсем çинчен» постановлени йышăннăранпа тата ялти потребительсен обществин примерлă Уставне çирĕплетнĕренпе икĕ çул иртсе ĕнтĕ. Ку постановлени потребкооперацин ĕçне çĕнĕлле йĕркелес çĕрте пытех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Асăннă постановлени тата Устав тăрăх иртернĕ иртнĕ çулхи суйлавсем ялсенчи сутуилӳ ĕçне лайăхлатса пырас çĕрте палăрса вырăн йышăнчĕç.

Пирĕн республикăри чылай районсенче потребитель кооперацийĕсем организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕпленсе пыраççĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче тупăшлă ĕçлекен, убыткăçăр ĕçлекен сельпосен хисепĕ нумайланчĕ. 1939 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне убыткăллă ĕçлекен сельпосем—39, 1940 çулти январĕн 1-мĕшне — 43 пулнă пулсан, 1941 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне ун пек сельпосем 18 шутланасçĕ. Потребкооперацинче ĕçлекенсен задачи — пур сельпосене те тупăшлă, ăнăçлă ĕçлекен тăвасси пулать.

Чăвашпотребсоюз системинчи предприятисем икĕ çул хушшинче 6.465 пин тенкĕлĕх тупăш панă, 5.134 пин тенкĕлĕх пай укçи пухнă, 65 пине яхăн çынна потребкоопераци членне илнĕ. Çĕнĕрен магазинсем район центрĕсенче 7, ялсенче 106 уçнă. Кунсăр пуçне 23 çĕрте столовăйсемпе чайнăйсем туса лартнă.

Анчах та ялсенче сутуилӳ ĕçне çӳлĕ пуçăма хăпартас тĕлĕшпе халĕ нумай ĕçлемелле-ха. Сельпосен, райпотребсоюзсен ĕçĕнче çитменлĕхсем пайтах курма пулать. Сельпосем товар çăвăрăнне ӳстерсе, вăйлатса пырассишĕн сахал ĕçлеççĕ-ха. Правительство кăтартса панă тăрăх кашни сельпон сахалтан та икĕ магазин пулмалла. Пирĕн республикăри сельпосем çакна пурнăçа кĕртсе çитереймен. Паянхи куна тăвата район центрĕнче: Калининăра, Октябрьскинче, Советскинче тата Первомайскинче раймагсем çук. 29 сельпон пĕрер магазин та çук. 1940 çулта палăртнă ялти магазинсенчен 19 магазина туса пĕтереймен.

Потребкооперацинчи пысăк çитменлĕх вăл — растратăсем. Çак çитменлĕхе чылай çĕрте паян кун та пĕтереймен. Çитменнине вăл хăшпĕр çĕрте 5 чакас вырăнне ӳссе пырать. Иртнĕ çулта Йĕпреç районĕнче 80 пин тенкĕлĕх, Етĕрне районĕнче 82 пин тенкĕлĕх, Красноармейский районра 83 пин тенкĕлĕх растрата тунă. Çак çитменлĕхсем вĕсем чи малтан сельпосен тата райпотребсоюзсен руководительсем кадрсем суйласа илес ĕç çине пите те сӳрĕккĕн пăхнинчен килеççĕ. Растратăсем ку тарипчен те пĕтмении тепĕр енчен, потребитель обществисен ревизи комиссийĕсем, лавкка комиссийĕсем начар ĕçлени çинчен калать. Вĕсем чылай çĕрте хăйсен ĕçне кирлĕ пек йĕркелемен-ха. Ревизи комиссийĕсем, Райсоюзсем тата, çавăн пекех, Чăвашсоюз енĕпе те ревизисем сахал ирттереççĕ. Вăрă-хурахла, кукăр алăллă çынсем валли, халăх пурлăхне тустаракансем валли совет суту-илӳвĕн ĕçĕнче выран пулмалла мар. Суту-илӳре тӳрĕ кăмăллă, ĕçе юратакан, парăнса ĕçлекенсем кăна пулмалла.

Сельпосен магазинĕсемпе ларекĕсенче культурăллă суту-илӳшĕн кĕрешекен работниксем сахал мар. Анчах лайăх продавецсен, потребкоопераци ирттерекен хатĕрлевсем енĕпе паха ĕçлекенсен опычĕсем пуриншĕн те пример пулса тăман. Пур-ха пирĕн çакăн пек магазинсемпе ларекĕсем тетаварсем хумалли вырăнсенче, çӳлĕксем çинче, кантăксем çинче пӳрне хулăмăш тусан, кĕтессенче эрешмен картисем сырса илнĕ, урайсем таса мар. Товар хакĕсене кăтартакан прейскурантсем çук. Çакăн пек магазинсенче ĕçлекенсем, паллах ĕнтĕ, культурăллă суту-илӳшĕн тăрăшмаççĕ. Посетительсене кăмăллăн йышăнма пĕлмеççĕ, посетительсем мĕнле таварсем ытларах ыйтнине хисепе илмеççĕ.

Отчетпа суйлавсем иртнĕ вăхăтра пайщиксем кооперади ĕçĕнчи çав çитменлĕхсене пĕтерес пăрки çивĕч чĕн каласа хăварчĕç. Потребкооперацин отчетпа суйлав кампанине кашни сельпона организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетес майпа ирттермелле. Ĕççыннисем хушшинче, пайщиксем хушшинче суту-илӳ организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен анлăн ăнлантарса парас пулать. Сталин ютлаш: Совет суту-илӳ ĕçĕ вăл — хамăрăн тăван ĕç, ăна пурнăçа кĕртмесĕр малалла кайма çук, тесе вĕрентнине пĕр самантлăха та манма юрамасть. Кооператри членĕсен йышĕ тăтăшах ӳссе пытăр, кашни членпайщик хăйĕн обязанноçне активлăн пурнăçласа пытăр.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ тата СССР Совнаркомĕ 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче вырăнти чĕртаварсенчен куллен кирлĕ таварсемпе продовольстви туса кăларас тĕлĕшпе йышăннă постановлени потребкооперади умне питĕ те пысăк задачăсем кăларса тăратать. Вырăнти таварсемпе тата продовольстви çимĕçĕсемпе суту-илӳ тăвас ĕçсене кăçал нихăçанхинчен те анлăрах сармалла. Суту-илӳ организацисен хăйсен продовольстви базисем тăвас пулать, сыснасене самăртмалли пунктсем, пулă ĕрчетмелли кӳлĕсем, пахча-çимĕç ӳстермелли вырăнсем организацилесе, çырла çимĕçсем, кăмпа таврашсем пухса хатĕрлесе, çавна май, вырăнта туса кăларнă продовольствипе суту-илӳ тăвас ĕçе вăйлатмалла. Çак ыйтусем çинчен отчетпа суйлав пухăвĕсенче анлăн та тимлĕн сӳтсе-явма кирлĕ.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ йышăннă 1941 çулти халăх хуçалăхĕн государствăллă планне ырларĕ. Ку план кăçал государствăллă тата кооперативлă суту-илӳве 197 миллиард тенкĕлĕхе çитерме — иртнĕ çулхинчен 22,5 миллиард тенкĕ ытларах ӳстерме пăхать. Çакă вăл çирĕп программа, суту-илӳ работникĕсен ăна пурнăçлассишĕн тимлĕн кĕрешмелле. Ĕçĕн ăнăçлăхне суту-илӳве тĕрĕс йĕркелени, плана пурнăçа кĕртессишĕн пĕлсе кĕрешни, ăна куллен тултарса пыни татса паратать.

Потребкооперади ситеминче отчетпа суйлав кампанине ирттернĕ май, суту-илӳ ĕçĕнчи работниксем хушшинче ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, социализмлă ăмăртăва сарас тĕлĕшпе, таварçăварăнăш планне кунран кун, уйăхран уйăха, кварталтан квартала тултарса пырас тĕлĕшпе ĕçе большевикла йĕркелемелле.

Совет суту-илĕвĕнчи кашни работник, кашни кооператор вăл — халăх тарçи. Вĕсен яланах халăх интересĕшĕн тăрăшмалла, суту-илӳ ĕçне йĕркелĕн туса пырассишĕн кĕрешмелле. Çавăнпа та суйлавсем ирттерсе, кооперади ĕçне тӳрĕ кăмăллă çынсене, пуçарулăллă ĕçлекенсене, суту-илӳ ĕçне чунтан юратакан, партине тата хамăрăн тăван çĕршыва парăннă çынсене суйласа хăвармалла. Кашни сельпо работникĕн, потребкооперацинче ĕçлекен кашни çынăн çакна астумалла: сельпосен тата райпотребсоюзсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене шăлса, пытарса хăвармалла мар, вĕсене пур майсемпе те тăрă шыв çине кăлармалла, самокритикăна анлăн сармалла, потребкооперацинче ĕçлекенсенчен тивĕçлипе отчет ыйтмалла.

Çакна шанса тăмалла: партипе совет организацисем ертсе пынипе, потребкооперацисен членĕсен-пайщиксен масси кооперади ĕçне, ялти суту-илӳ ĕçне кăтартуллăн йĕркелесе пыма пултаракан çынсене суйласа хăварĕ. Çĕнĕрен суйласа хăварнă çынсем, суту-илӳ ĕçне куллен тултарса пынăн практикăра тимлĕн вĕренсе пырса, ялти суту-илӳ ĕçне лайăхлатса пырас тĕлĕшпе партипе правительство лартнă задачăсене ăнăçлăн, большевикла пурнăçласа пырĕç.

Конференци материалĕсене вĕренеççĕ

ЭЛЕК. Элĕкри вăтам шкулта вĕренекенсене вĕрентекенсем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцинче ВКП(б) Центральный Комитечĕн секретарĕ Маленков ютлаш «Парти организацисен промышленность тата транспорт тĕлĕшĕнчи задачисем çинчен» тунă доклада пысăк тимлĕхпе вĕренеççĕ. Шкулти партин пуçламăш организацийĕ (секретарĕ С. Быков) конференци материалĕсене вĕренме ятарласа план тунă. Çав план тăрăх Маленков Вознесенский ютлашсен докладĕсене тата çав докладсем тăрăх йышăннă резолюцисене тĕплĕн те тарăннăн вĕренмелле. Маленков ютлаш докладне 4—7 классенче вуласа тухса калаçусем туса иртереççĕ, 8—10 классенче кружоксенче вĕренеççĕ. Кружоксенче вĕренекенсем чылайĕшĕ Маленков ютлаш докладне вĕренсе пĕтернĕ. Вознесенский ютлаш докладне вĕренме тытăннă. Çавăн пекех тата профсоюз членĕсем те конференци материалĕсене харпăрăх тĕллĕн вĕренсе конспектсем сыраççĕ.

А. Черенков.

СССР Союзĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VIII Сессийĕ

СОЮЗ СОВЕТĔНЧЕ

Февралĕн 28-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре Союз Совечĕн тăваттăмĕш ларăвĕ уçăлнă. Председатель сĕтелĕ хушшинче — Союз Совечĕн Председателĕ депутат **А. А. Андреев,** Союз Совечĕн Председателĕн Заместителĕсем — **Т. Д. Лысенко** тата **У. Юсупов** депутатсем. Ложăсем çинче — СССР Верховный Совет Президиумĕн членĕсем тата Правительство членĕсем, вĕсемпе пĕрле — **В. М. Молотов** ютлаш. Вĕсене депутатсем нумайччен алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Председатель пулса ертсе пыраканĕ — Союз Совечĕн Председателĕн Заместителĕ депутат **У. Юсупов.**

СССР Государство бюджечĕ ӳснипе пĕрлех, областсен, хуласен тата ялсен вырăнти бюджечĕсем те çултан çулах ӳссе пыраççĕ. Çак ӳсĕме **П. Г. Свинаренко** депутат Харьковпа Харьков областĕн примерĕпе кăтартса парать.

Свинаренко депутат: Правительство колхозсенчен доход тăрăх пленкен налог çинчен калакан закона улшăнусем кĕртме тата колхозниксенчен, единоличниксен хуçалăхĕсенчен те ялхуçалăх налогĕ илесси çинчен калакан закона тӳрлетӳсем кĕртме тăратнă проекта йышăнас пулать, тесе калать.

СССР Строительство материалĕсен промышленноçĕн Халăх Комиссарĕ **Л. А. Соснин** ютлаш: СССР Союзĕн 1941 çулти Государство бюджечĕ тăрăх капитальнăй вложенисене малалла ӳстерме палăртса хунă, çакă вăл строительство материалĕсем тăвакан промышленноçăн ĕçне татăклăнах лайăхлатма хушать, тесе калать. Наркоматпа унăн предприятийĕсен ĕçне критиклени тĕрĕс тесе йышăнса, Соснин ютлаш Наркомат строительство материалĕсен производствине ӳстерме тата вĕсен пахалăхне лайăхлатма туса ирттерекен мероприятисем çинчен Сессине пĕлтерет. Çĕнĕ предприятисем чылай ĕçе кĕреççĕ, халĕ ĕçлекен заводсенче те производствăллă мощноçемпе туллинрех усă курмалла тăваççĕ.

— Совет Союзĕн Правительстви тăратнă бюджет, — тесе калать депутат **Р. Е. Мельников,** — уйрăм республикăсен, крайсен тата областсен пысăкланнă ыйтăвĕсене тата уйрăмлăхĕсене шутра тытать. Бюджетра администрацине управлени расхочĕсене икĕ миллиард тенкĕ чакарма палăртса хунă. Çак сĕнĕве йышăнассишĕн тăрса, депутат Мельников СССР Наркомфинĕче унăн вырăнсенчи органĕсем администрацине управлени расхочĕсене чакарассине халĕ те çапла хăюсăр туса пыраççĕ, тесе шутлать. Сăмахран, Смоленск областĕнче йĕтĕн илсе хатĕрлес ĕçе икĕ трест — Смоленскри тата Вязьмăри трестсем туса тăраççĕ.

Кунсăр пуçне, Заготленăн областри контори пур. Тĕрĕссипе илсен çав организацисем пĕр ĕçех пĕрин хыççăн тепри туса пыраççĕ. Сĕт илсе хатĕрлес тĕлĕшпе те ĕç савăн пекех тăрать. СССР Наркомфинĕн Наркоматсен структурипе штачĕсене тĕплĕн пăхса тухас пулать. Пĕр ĕçех темиçен тăвакан ытлаши главксемпе трестсене пĕтермелле. Çакă вăл государство средствисене нумай перекетлесе хăварма май парĕ.

Депутат **П. С. Тарасов** Мускав областĕн 1941 çулта бюджечĕ çинчен чăрăнса тăрать. Бюджетăн тĕп паллийĕ—областăн хăйĕн дохочĕсем чылай ӳсни пулать. Юлашки виçĕ çул хушшинче çак доходсем икĕ хут ытла ӳсрĕç. Çак доходсем ӳснин чи пысăк источникĕ—ӳссе пыракан вырăнти промышленность. 1941 çулта вăл бюджета 1938 çулта панинчен виççĕ те çурă хут нумайрах средствăсем парать.

Мускав областĕн бюджетĕнчи расходсен тăватă пайĕнчен виçĕ пайĕ социалăлă-культурăллă мероприятисене валли каять. Халăха вĕрентес ĕç валли расходсем 348 миллион тенкĕ ытла пулаççĕ, çакă вăл партин XVIII съезчĕ всеобуч (пурне те вĕрентес) тĕлĕшпе кăларса тăратнă задачăсене областре пурнăçа кĕртме май парать.

СССР Текстиль промышленность Халăх Комиссарĕ **И. П. Акимов** ютлаш куллен кирлĕ таварсен производствине сарма паракан ассигнованисем çултан çулах ӳссе пынин цифрисене илсе кăтартать.

СССР Союзĕн 1941 çулти Государство бюджечĕ тăрăх текстиль промышленноçне 630 миллион тенкĕ пыма палăртнă. Çакă вăл çĕнĕ предприятисене ĕçе кĕртме, пиравăр туса кăларассине чылаях ӳстерме май парать. Пиравăр тĕртекен чылай предприятисем, Барнаулти комбинатăн иккĕмĕш черечĕ т. ыт. те ĕçе кĕреççĕ, Эстони СС Республикинчи ĕçлемесĕр тăнă пит пысăк текстиль предприятине — Кренгольмскн мануфактурăна — татăклăнах ĕçе ямалла пулать. Текстиль промышленноçĕн тупăшĕсенчен бюджета уйăрса панисем ӳсеççĕ. Ку вăл текстильшиксене продукци туса кăларма хăйне ларакан хака чакарассишĕн тата продукци пахалăхне ӳстересслĕн хăватлăрах кĕрешме хушать.

— Государствăн 1941 çулти бюджечĕн кашни статьинчех, — тесе калать депутат **Д. Д. Леженко,** — Ленин — Сталин партийĕ, Совет Правительстви хамăрăн аслă тăван çĕршыв малалла чечекленсе пырассишĕн, унăн хăватне тĕреклетессишĕн тăрăшни палăрса тăрать. Кашни çулталăк Совет Союзне çĕнĕрен пысăк çĕнтерӳсем кӳрет.

Оратор Украина СС Республикинчи çĕнĕ облаçăн халăх хуçалăхĕпе культури тăвăллă хăвăртлăхсемпе ӳссе чечекленсе пынине кăтартакан фактсем çинчен каласа парать.

Обласри районсенче вырăнти промышленноçăн 111 предприятине, машинно-тракторнăй станцисем тата совхозсем чылай организациленĕ. Елăк Дрогобыч облаçĕн территорийĕнче пĕрре кăна хуларн больница пулнă, ялсенче сыватакан учрежденисем пулман. Халĕ ĕнтĕ 21 больница, 53 ача яçли, ача çуратмалли çуртсем т. ыт. те уçнă, 118 шкул, педагогика институчĕ, 7 техникум, украинеçсен драма театрне уçнă.

Краснодар крайĕнчи ялхуçалăхăн ситĕнĕвĕсем çинчен депутат **П. Ф. Тюляев** каласа парать. Сталинла виçĕмĕш пятилетка çулĕсенче тĕшшăрсен тухăçĕ гектар пуçне 11,4 центнертан 15 центнера çити ӳсрĕ, рис тухăçĕ 18,5 центнертан 40 центнера çити ӳсрĕ. Иртнĕ çулта колхозниксем 83 пин гектар çинче вырнă хыççăнах тепĕр хут акса илчĕç. Çакă вăл татах 3 миллион пăта яхăн пуçтарса кĕртме май пачĕ. Колхозниксен вăйĕпе Тщик водохранилищине тунă, Кубань юханшывĕ сарăлса каясран чарма вал туса тухнă. Çапла вара, Кубань юханшывĕн анатри пайĕнче тырпул пит вăйлă пулакан вырăнсене шыв илессинчен хăтарнă.

Унтан СССР чугунçул транспорчĕ çинчен депутат **В. Н. Образцов** сăмах тухса калана. 1935 çултан пуçласа чугунçул транспорчĕ пĕрмаях малалла кайса пырать. Паровозсемпе вагонсен паркĕ хушăнчĕ, паровозсем мащноçĕ ӳсрĕ, механизацине автоматизаци анлăн ĕçе кĕрсе пырать. Чугунçулсем тăрăх тавар турттарасси ĕнтĕ пирĕн çĕршыва Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчинчен темиçе хут йӳнерехе ларать.

Чугунçул транспорчĕн ĕçĕнче, çапах та, пысăк çитменлĕхсем — ытлашши простойсем, хире-хирĕç тата ытла пит инçене турттарнисем пур-ха. Çав çитменлĕхсене пĕтерни пире транспортăн мощноçĕсене çитерме çĕнĕ резервсем парĕ.

Çав çитменлĕхсемпе кĕрешес çĕрте стахановла движени пит пысăк вырăн йышăнмалла, — чугунçул транспорчĕ çинче стахановла движенине пирвайăн пуçарса яракансем Кривонос, Огнев, Троицкая т. ыт. те пулчĕç. Халĕ ĕнтĕ чугунçул транспорчĕ çинчи стахановецсем хушшинче Папавин тата Лунин машинистсем пек çынсем пур, вĕсем хăйсен ĕçĕсене опыт тăрăх кăна мар, техникăллă пысăк пĕлӳсем тăрăх туса пыраççĕ. Стахановецсем хăйсем вĕренеççĕ тата ыттисене те вĕрентеççĕ. Стахановла ĕçĕн мастерĕсем наукăпа туслă пулса ĕçлени пысăк усă парать. Вăл ĕçĕн çĕнĕ меточĕсене туса хатĕрлеме тата вĕсене хăвăртрах ĕçе кĕртме май парать.

СССР Союзĕн 1941 çулти государство бюджечĕ чугунçул транспортне малалла аталантарса пырассине пĕтĕмпех хисепре тытать, железнодорожниксене çĕнĕрен пысăк çитĕнӳсем тума май парать.

Депутат **С. А. Олексенко** ялхуçалăхне электрификацилесси çинчен калать. Украина СС Республикинчи колхозсен примерĕсене илсе, оратор колхозсенче производство процессĕсене электрификацленин пахалăхне кăтартса парать. Анчах çак ĕçĕн масштабĕсем пит те çителĕксĕр-ха. Пысăк мар мощнослă электростанцисем лартмашкăн юханшывсемпе сахал усă курраççĕ.

Сессире пăхса тухма тăратнă бюджета ырласа, депутат Олексенко ялхуçалăхне электрификацилеме кирлĕ ассигнованисене те хисепе илме ыйтать.

Вырăнти советсен укçа-тенке питĕ те тирпейлĕ тытăканипе бюджетсене малалла çирĕплетсе пыма мĕн кирли пурте пур. Депутат **П. А. Найденов** хăйĕн сăмахĕнче çавăн пек примерсене сахал мар илсе кăтартать. Ĕççыннн депутачĕсен Днепропетровск облаçĕнчи Советĕн исполкомĕ нумай пулмасть вырăнти промышленность предприятийĕсен тата промысла кооперацин штачĕсене тĕрĕслесе тухрĕ. Çакăн хыççăн нумай предприятисен ытлашши пысăкланса кайнă администрацине управлени аппаратне чылай чакарма, укçа тенкĕ нумай перекетлесе хăварма май килчĕ.

Çакăнпа Союз Совечĕн ларăвĕ хупăнать. Çитес лару мартăн 1-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре пулать. (ТАСС).

НАЦИОНАЛЬНОÇСЕН СОВЕТĔНЧЕ

Февралĕн 28-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре Национальноçсен Совечĕн тăваттăмĕш ларăвĕ уçăлнă. Председатель сĕтелĕ хушшинче — Национальноçсен Совечĕн Председателĕ депутат **Н. М. Шверник,** Национальноçсен Совечĕн Председателĕн заместителĕсем —**Ч. А. Асланова** тата **М. В. Кулагин** депутатсем. Ложăсем çинче — СССР Верховный Совет Президиумĕн членĕсемпе Правительство членĕсем.

СССР Союзĕн 1941 çулти Государство бюджечĕ çинчен тунă доклада тата Национальноçсен Совечĕн Бюджет Комиссийĕн содокладне малалла сӳтсе-явнă. Председатель пулса ертсе пыраканĕ депутат **М. В. Кулагин Ф. Г. Бровко** депутата сăмах парать.

— СССР Союзĕн Государство бюджечĕ, Правительство Сессире пăхса тухма тăратнă бюджет,—тет Бровко ютлаш, — Совет Союзĕн экономики, культури тата оборона хăвачĕ малалла ӳссе пыннине кăтартса парать.

Бессараби халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывне çĕнĕрен тупрĕ. Совет власĕ туса хунă хыççăн пирвайхи кунсенчен тытăнсах ирĕке тухнă Бессарабири ĕççыннисем социализм строительствине активлăн хутшăнчĕç. Промышленноçлă тата коммуналлă предприятисене ура çине тăратаççĕ, реконструкцилеççĕ.

Ялхуçалăхĕ хăвăрт çĕкленсе пырать. Бессараби территорийĕнчи шкулсенче хальхи вăхăтра 242 пин çын — Румыни оккупанчĕсем пуçпулса тăнă вăхăтринчен 1,5 хут нумайрах — вĕренет. Ĕççыннисен сывлăхне сыхлас ĕçе лайăхлатас ĕçе, культурăн çĕнĕ учрежденийĕсене организацилес ĕçе нумай средство хунă.

Депутат **Т. Мирзаев** хăйĕн сăмахне узбек чĕлхипе калать.

— 1941 çулти государство бюджечĕн цифрисенче, — тет вăл, — Совет Союзĕнчи мĕнпур республикăсемшĕн сталинла тăрăшни палăрса тăрать. Çапла тăрăшни вăл пире татах та лайăхрах ĕçлеме, промышленноçа, ялхуçалăхне татах та çӳлерех хăпартма хушать.

Узбекистанра çĕрмамăк тухăçлăхне малалла хăпартса пырассишĕн кĕрешме кирлĕ условисем йăлтах пур. Хлопкпа люцернăллă пусуçавăрнăшпе усă куракан колхозсен хисепĕ ӳссе пырать, çакă вăл çĕрмамăк тухăçлăхне хăпартма кăна мар, тата ӳссе пыракан выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç валли апат бази туса хума та пулăшать. 1941 çулта татах 1.738 колхоза хлопкпа люцернăллă пусуçавăрнăш çине куçараççĕ. Анчах та СССР Наркомземĕ Узбекистанри шăварса тăракан çĕр лаптăкĕсем çинче тĕрĕс пусуçавăрнăш туса хурас ĕç çине кирлĕ пек тимлĕн пăхмасть, çак ĕçре республикăри çĕрĕç органĕсене практикăллă пулăшу памасть.

Депутат **Н. В. Козырев** совхозсен рентабельноçне хăпартас ыйтусем çинчен калать. Украинăри совхоз строительствин çитĕнĕвĕсене палăрса туса, вăл çапла кăтартса парать: 1940 çулта çанталăк условийĕсем лайăх пулнă тата техника пуян пулнă пулсан та, Украинăри хăшпĕр совхозсем производство планне тултарман. Çакă вăл ĕçе начар организацилененчен, куракăлă тĕрĕс пусуçавăрнăш пулманнинчен, тĕшшăрă совхозĕсенче вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç начар ataланнинчен килет.

Юлашкинчен Козырев ютлаш Украинăри совхозсен рентабельноçне хăпартас тĕлĕшпе чылай сĕнӳсем парать.

Бюджета ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси тӳррĕмех промышленность мĕнле ĕçленинчен, продукцин хăйне тума ларакан хакĕнчен, финанс дисциплинине çирĕппĕн пăхăнса тăнинчен килет. Хăйĕн выступленийĕнче СССР Цветной металлурги Халăх Комиссарĕ **П. Ф. Ломако** ютлаш цветной металлурги промышленноçĕн предприятийĕсенчи финанс ĕçĕсем çинчен калать. 1940 çулччен вĕсем тăтăмах государство дотацийĕсемпе усă курнă, вĕсен ĕçĕнче убыток пулнă. 1940 çулта Цветной металлургине пирвайхи хут тупăшсен накопленине тума план панă.

СССР Союзĕн 1941 çулти Государство бюджечĕ предприятисен рентабельноçне малалла хăпартса пыма палăртать. 1941 çулта наркоматăн средствăсен оборотне хăвăртлатмалла, брака пĕтĕмĕшпех пĕтермелле, продукци пахалăхне лайăхлатмалла.

Депутат **Н. Нурбаев** СССР Союзĕн 1941 çулти Государство бюджетне, Совет Союзĕн Правительстви тăратнă бюджета çирĕплетме сĕнӳ парать.

Союзăлă республикăсен бюджечĕсем çулран çулах ӳссе пыраççĕ, экономикăна тата формине пациллĕ, содержанийĕне социализмлă культурăна вăйлăн ӳсме май параççĕ. Çапла, сăмахран, Киргиз СС Республикинчи халăх хуçалăхĕне социалăл-культурăллă ĕçсем валли паракан средствăсем, 1925—26 çултипе танлаштарсан, 1941 çулта 136 хут ӳсеççĕ.

Союзăлă чылай республикăсенче, вăл шутрах Киргизире те, тет депутат Нурбаев, доходсем бюджета пĕр пек пухăнса пымаççĕ: пĕрремĕш çурçулта ялан пекех средствăсен поступленийĕ чăрăнса тăрать, иккĕмĕш çурçулта — вăйланать. Пĕрремĕш çурçулта хуçалăхăл-культурăллă мероприятисем валли укçа-тенкĕ пĕр чăрмавсăр парса тăмалла пултăр тесе, союзăлă республикăсен бюджечĕн резерври фондне ӳстермелле, ăна бюджетăн пĕтĕм суммин 2 процентне çити хăпартмалла.

Кинематографи ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ сумĕнчи Комитечĕн Председателĕ **И. Г. Большаков** ютлаш комитет ĕçне Сессире критиклени тĕрĕс тесе йышăнать. Уйрăмăн илсен, кинофильмсене пĕтĕм çулталăкĕпех пĕр пекрех хисеппе кăларса пымалла.

1941 çулта экрансем çине пысăк художествăллă çĕнĕ фильмсем — Царицына хӳтлени çинчен, граждан вăрçин легендарлă геройĕ Пархоменко çинчен калакан фильмсем, Литвари, Латвири тата Эстонири ирĕке тухнă халăхсен пурнăçĕ çинчен документлă фильмсем т. ытти те туса кăлармалла. Союзри чылай пысăк хуласенче, пуринчен малтан Ленинградпа Киевра, стереоскопăлă кинотеатрсем тума, тĕслĕ кинофильмсем виçĕ фильм кăларма палăртнă.

Малалла депутат **Ф. А. Растягаева** тухса калать:

— Совет власĕн çулĕсенче Удмурт çĕршывĕ чечекленсе тăракан социализмлă республика пулса тăчĕ. Çак ӳсĕме тума хуçалăхпа культура строительстви валли паракан ассигнованисем çулран çулах ӳссе пыни пулăнă. Республикăри халăх хуçалăхĕнче промышленноçăн удельнăй виçи 85 процента çитнĕ. Партипе правительство Удмурт халăхĕшĕн куллен кун тăрăшни халăха вĕрентес ĕçпе сывлăха сыхлас ĕç валли питех те пысăк средствăсем панинче палăрса тăрать. 1913 çулта Удмуртинче «халăха вĕрентес» тенĕ ĕç валли кашни çын пуçне 1 тенкĕ те 72 пус панă. 1939 çулта çак сумма 60 тенке çитнĕ. Халăха вĕрентес ĕç валли çакăн пек расходсем тунине капитализмлă пĕр çĕршыв та курман!

Бухара эмирĕн вотчини пулнă Таджикистан телейлĕ те пуян пурнăçлă ĕççыннисен çĕршывĕ пулса тăчĕ. Çакăн çинчен депутат **П. П. Стрелянов** лайăх каласа парать. Халăх хуçалăхĕ вăйлăн аталанса пырать. Çĕрмамăк тухăçлăхĕпе тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитĕнӳсемпе республикăри колхозсем Совет Союзĕнчи пĕрремĕш вырăнсенчен пĕрне йышăннă. Республикăра миллионер-колхозсем 90 колхоз пытла шутланаççĕ. Республикăра 3 пин шкул, аслă шкулсем, техникумсем пур. Таджикистан марксизм-ленинизм классикĕсене хăйсен тăван чĕлхипе вулаççĕ, нациллĕ театрсен сценисем çинче Шекспир произведенийĕсене лартаççĕ.

Социалăл-культурăллă ĕçсем валли паракан ассигнованисем çинчен сăмах тапратса, депутат Стрелянов çакна палăлă тăвать: наркоматсем научно-исследовательский институтсен ĕçĕсене çителĕксĕр тĕрĕслесе тăраççĕ.

Депутат **В. С. Гризодубова** çапла кăтартса парать: 1940 çулта чугунçул транспортĕнче ĕçсен хăйне ларакан хакĕ тĕлĕшпе панă заданине тултарман. Топливăпа перекетлĕрех усă курмалла, çĕнĕ техникăран вăл мĕн пама пултарнине йăлтах илмелле, лунинецсен тата транспортри ытти чаплă çынсен опытне мĕнпур чугунçул работникĕсен тивĕçлĕхĕ туса хумалла.

Шывçул транспорчĕ пĕтĕм халăх хуçалăх аталанăвĕн хăвăртлăхĕсенчекая юлса пырать-ха.

Сывлăш çулĕсен тăршшĕ енĕпе илсе пăхсан, ССР Союзĕ тĕнчере пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать. Иртнĕ çулта граждансен сывлăш флочĕ çĕнĕ ситĕнӳсем тунă. Союзăлă çамрăк республикăсенче çĕнĕ трассăсем организацленĕ, 10-шар пин пассажирсене, вуншар пин тонна грузсемпе почтăна самолетсем çинче турттарнă, 919 пин гектар çĕрлаптăкĕ çинче ялхуçалăхне сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсене пĕтернĕ. 1941 çулта граждансен сывлăш флочĕ умĕнче анлă çулсем сарăлса выртаççĕ.

Депутат **Г. Н. Сухарев** Еврей автономлă облаçĕн ситĕнĕвĕсем çинчен калать. Прнамурье территорийĕ çинче, тайгаран çĕнтерсе илнĕ çĕрсем çинче, хуласем, поселоксем, промышленноçлă предприятисем, 64 колхоз, 8 МТС, 37 промартель, 127 шкул, театр, библиотекăсем туса хунă.

Депутат **В. П. Ставский,** халăха вĕрентес ĕç валли пысăк средствăсем паннине палăлă туса, кадрсем хатĕрлес ĕç çинчен, кинематографи ĕçĕсен комитечĕне искусство ĕçĕсен комитечĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен тĕплĕн калать.

— Çĕршыв оборонин нушисем валли 70.900 миллион тенкĕ ассигновани паннине, — тет депутат Ставский, — пĕтĕм совет халăхĕ, пĕтĕм совет патриочĕсем пĕтĕм чĕререн ырласа саламлĕç. Ĕççыннисен аслă çулпуçĕ Сталин ютлаш пире экономикăпа оборона хăватне çирĕплетме, пирĕн ССР Союзĕнче коммунизм тăвас аслă ĕçе нимĕнле «ăнсăртлăх та» чăрмантарма ан пултăр тесе, яланах сыхă тăма вĕрентет.

— Совет патриотизмĕ—пирĕн обществăна малалла тĕксе пыракан хăватлă вăй. Совет патриочĕсем сахал мар чапла ĕçсем турĕç. Ытти депутатсем пекех, — тет депутат Ставский,— эпĕ государствăн 1941 çулти бюджетне çирĕплетме сĕнетĕп.

Çакăнпа Национальноçсен Совечĕн ларăвĕ хупăнать.

Çитес лару мартăн 1-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре пулать. (ТАСС).

ССР СОЮЗĔН СОВНАРКОМĔПЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕТĔНЧЕ

Кок-сагыз акса тăвакан çĕр лаптăкне ӳстермелли тата кок-сагызăн тухăçлăхне хăпартмалли мероприятисем çинчен

ССР Союзăн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çакна палла тăваççĕ: сталинла виççĕмĕш пятилетка çулĕсенче кок-сагыз акса тăвакан çĕр лаптăкĕсем чылаях ӳсрĕç, колхозсем çак технически культурăна акса тума ытларах та ытларах вĕренсе пыраççĕ.

Колхозниксен ĕçне тĕрĕс организацилеме тата кок-сагыза лайăх пăхса ӳстермелле тума пĕлнĕ хăшпĕр районсем, колхозсем тата звеносем 1940 çулта çак культурăн пысăк тухăçлăхне туса илнĕ.

Сумы облаçĕнчи Глуховский район 63,9 гектар çĕр лаптăкĕ çинчен икĕ çулти плантаци çинче вăтам шутпа гектартан 19-шар центнер кок-сагыз тымарĕ тата 105-шер килограмм кок-сагыз вăрлăхĕ туса илнĕ.

Чернигов облаçĕнчи Нежин районĕнчи «Червоне селище» колхоз 5,5 гектар çĕр лаптăкĕ çинче кашни гектартан 37,6-шар центнер кок-сагыз тымарĕ тата 129,4-шар килограмм вăрлăх пухса илнĕ.

Киев облаçĕнчи Черкасск районĕнчи «Пролетар» колхоз 24 гектар çĕр лаптăкĕ çинче гектартан 23,7-шер центнер тымар пухса илнĕ.

Сумы облаçĕнчи Глуховский районри Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз 10 гектар çĕр лаптăкĕ çинче гектартан 26-шар центнер тымар тата 174-шар килограмм вăрлăх пухса илнĕ.

БСС Республикинчи Минск облаçĕнчи Любанск районĕнчи «Ударник» колхоз 16 гектар çĕр лаптăкĕ çинче гектартан 30-шар центнер тымар пухса илнĕ.

Орел облаçĕнчи Знаменск районĕнчи Тургенев ячĕпе тăракан колхоз 4,6 гектар çĕр лаптăкĕ çинчен икĕ çулти плантаци çинче вăтам шутпа гектартан 46-шар центнер тымар пухса илнĕ.

Колхозсен хăшпĕр звенисем татах та пысăкрах тухăçлăхсем панă.

Çапла, сăмахран, Сумы облаçĕнчи Белопольск районĕнчи «Большевик» колхозри звеньевой А. А. Пармузина пĕр çулти плантацисен 1,4 гектарлă лаптăкĕ çинче гектартан 75-шер центнер тымар тата 283 килограмм вăрлăх пухса илнĕ.

Сумы облаçĕнчи Глуховский районри «Велетень» колхозри звеньевой М. Т. Жалова 2,6 гектар çĕр лаптăкĕ çинче гектартан 50-шар центнер тымар пухса илнĕ.

Иваново облаçĕнчи Юрьев-Польский районĕнчи «Трудовик» колхозри звеньевой А. Н. Вяльцева гектартан 74,9 центнер тымар пухса илнĕ.

Кок-сагыз акса тăвакан çĕр лаптăкĕсене малалла ӳстерес, унăн тухăçлăхне пур майсемпе те хăпартса пырас, промышленноçăн каучук тĕлĕнчи ӳссе пыракан нушисене тивĕçтерес тата кок-сагыз культурине аталантарса пырас ĕçпе колхозсемпе колхозниксем интересленессине хăпартас шутпа, ССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Натуральнăй каучук тăвакан промышленноçăн чĕртавар базине сарасси çинчен» 1940 çулти июлĕн 10-мĕшĕнче йышăннă постановлени çумне хушса, ССР Союзăн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ **çапла йышăннă:**

1. Кок-сагыз тухăçлăхĕн планне (контрактацине) ирттерсе тултарнăшăн колхозсемпе колхозниксене резина изделийĕсемпе хавхалантарса пыма çапла тăвас:

а) Кок-сагыз акса тума план панă колхоза, тухăçлăх планне мĕнпур звеносем ирттерсе тултаракан колхоза, тухăçлăхăн çирĕплетсе панă планĕнчен (контрактацирен) ирттерсе панă мĕнпур тымарсемшĕн, Наркомхимпромăн «Союзрасткаучук» тресчĕ урлă резина изделийĕсене çакăн пек расчетран, государство хакĕпе, заказ парса илме право парас:

пĕр мăшăр ăшăх калуш—кок-сагызăн 12 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр тарăн калуш—кок-сагызăн 16 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр хĕрарăм боти—кок-сагызăн 17 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр резина атă—кок-сагызăн 47 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр резина подошва—кок-сагызăн 6 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр комплект велорезина (покрышка тата камера)—кок-сагызăн 41 килограмм чĕртымарĕшĕн.

Автомашинăсем тытса тăракан колхозсене, ытти резина изделийĕсемпе пĕр танах, кок-сагызăн планран ирттерсе панă кашни 8 центнер чĕртымарĕшĕн тонна çурăллă автомашина валли пĕр комплект авторезина (камера тата покрышка) е 15 центнершăн виçĕ тоннăллă автомашина валли пĕр комплект авторезина, государство хакĕпе, заказ парса илме право парас;

б) тӳррĕмех кок-сагыз плантацийĕсем çинче ĕçлекен колхозниксен ĕçтухăçлăхне хавхалантарса пырас шутпа, колхозсене—вĕсем илнĕ резина изделийĕсен пĕр пайне звеносем хушшинче, звено çумне çирĕплетнĕ мĕнпур çĕр лаптăкĕ çинчен звено валли кок-сагыз тымарĕ пухма палăртса хунă планран ирттерсе панă тымар хисепĕ тăрăх, çак расчетран (государство хакĕпе) валеçсе пама сĕнес:

пĕр мăшăр ăшăх калуш—кок-сагызăн 40 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр тарăн калуш—кок-сагызăн 53 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр хĕрарăм боти—кок-сагызăн 57 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр резина атă—кок-сагызăн 157 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр резина подошва—кок-сагызăн 20 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр комплект велорезина (покрышка тата камера)—кок-сагызăн 137 килограмм чĕртымарĕшĕн.

2. Колхозра тухăçлăх планне звеносен пĕр пайĕ кăна ирттерсе тултарать тата çакна май колхоз кок-сагыз тымарĕсем памалли плана пĕтĕмĕшпех тултараймасть е ăна ирттерсе тултарнă хисеп плана ирттерсе тултарнă звеносене хавхалантарас йĕркепе резина изделийĕсем пама çителĕклĕ мар пулсан, çакăн пек чухне колхозниксемпе колхозсене резина изделийĕсемпе хавхалантарма çакăн пек йĕрке тăвас:

а) тӳррĕмех кок-сагыз плантацийĕсем çинче ĕçлекен звеносен колхозникĕсене, звено çумне çирĕплетнĕ çĕр лаптăкĕ çинче тухăçлăхăн планне ирттерсе тултарнă чухне, кок-сагыз тухăçлăхĕн планне (контрактацине) пĕтĕм колхоз мĕн чухлĕ ирттерсе тултарнине пăхса тăмасăр, тухăçлăхăн звено валли çирĕплетнĕ планĕнчен ирттерсе панă кок-сагыз тымарĕн хисепĕ тăрăх, çакăн пек расчетпа резина изделийĕсем парса хавхалантараççĕ:

пĕр мăшăр ăшăх калуш—кок-сагызăн 40 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр тарăн калуш—кок-сагызăн 53 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр хĕрарăм боти—кок-сагызăн 57 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр резина атă—кок-сагызăн 157 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр резина подошва—кок-сагызăн 20 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр комплект велорезина (покрышка тата камера)—кок-сагызăн 137 килограмм чĕртымарĕшĕн.

Тухăçлăх планне ирттерсе тултарнă звеносен колхозникĕсем валли резина изделийĕсене колхоз заказ парса илет.

б) Çакăн пек условисенче колхоза тухăçлăхăн планне (контрактацине) ирттерсе панă мĕнпур кок-сагыз хисепĕнчен 70 процент чухлĕ резина изделийĕсем парса, çакăн пек расчетран хавхалантараççĕ:

пĕр мăшăр ăшăх калуш—кок-сагызăн 17 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр тарăн калуш—кок-сагызăн 22 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр хĕрарăм боти—кок-сагызăн 24 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр резина атă—кок-сагызăн 65 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр резина подошва—кок-сагызăн 8 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр комплект велорезина (покрышка тата камера)—кок-сагызăн 57 килограмм чĕртымарĕшĕн.

в) звеносенчи колхозниксем хушшинче резина изделийĕсене кашни колхозник кок-сагыза пăхса ӳстернĕ чухне ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсен хисепĕ тăрăх валеçсе параççĕ;

г) бригада тăрăх колхоз палăртса çирĕплетнĕ планлă вăтам тухăçлăхран (контрактацирен) ирттерсе панă кок-сагыз чĕртымарĕн кашни центнерĕшĕн бригадира 4 тенкĕ чухлĕ преми памалла.

Çак премине бригадира звеносен çурринчен кая мар пайĕ тухăçлăх планне ирттерсе тултарнă чух памалла;

д) колхоз валли палăртса çирĕплетнĕ тухăçлăх (контрактаци) планĕнчен ирттерсе панă кок-сагыз чĕртымарĕн кашни центнерĕшĕн колхоз председательне 2 тенкĕ чухлĕ преми памалла.

Колхоз председателĕпе бригадира çак премисене колхоз планран ирттерсе панă кок-сагыз тымарĕсемшĕн илнĕ суммăран памалла.

3. Колхоз председателĕпе бригадирĕсене тухăçлăх планĕнчен (контрактацирен) ирттерсе панă кок-сагыз тымарĕшĕн тухакан премисен 50 проценчĕ чухлĕ суммăллăх резина изделийĕсем пама колхозсене право парас.

4. Кок-сагыз акассине сарас тесе, ăна акма государство планне паман колхозсене те çавăн пекех çак культурăна акма сĕнес.

СССР Совнаркомĕ 1937 çулти апрелĕн 16-мĕшĕнче «1937 çулта каучуконоссем акса тăвассине сармалли мероприятисем çинчен» йышăннă 626-мĕш номерлĕ постановлени, 1938 çулти июлĕн 21-мĕшĕнче «Промышленнăй каучуководствăна сарассине тата натуральнăй каучук производствине аванлатмалли мероприятисем çинчен» йышăннă 845-мĕш номерлĕ постановлени тата СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1940 çулти июлĕн 10-мĕшĕнче «Натуральнăй каучук тăвакан промышленноçăн чĕртавар базине сарасси çинчен» йышăннă 1215-мĕш номерлĕ постановлени план памасăрах кок-сагыз акса тăвакан колхозсем тĕлĕшпе те вăйра пулмалла тăвас.

Кок-сагыз акма государство планне паман, анчах кок-сагыз акнă колхозсене валли государствăна паракан кок-сагызăн пирвайхи центнерĕнчен пуçласа резинăран тунă япаласем парса хавхалантармалли йĕрке тăвас тата Наркомхимпромăн «Союзрасткаучук» тресчĕ урлă резинăран тунă япаласем илме заказ пама тата государство хакĕпе илме ирĕк парас,—ку вăл çак расчетпа пулса пымалла:

пĕр мăшăр ăшăх калуш—кок-сагызăн 17 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр тарăн калуш—кок-сагызăн 22 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр хĕрарăм боти—кок-сагызăн 24 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр резина атă—кок-сагызăн 65 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр резина подошва—кок-сагызăн 8 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр комплект велорезина (покрышка тата камера)—кок-сагызăн 57 килограмм чĕртымарĕшĕн.

План памасăрах кок-сагыз акнă, вĕсен автомашинăсем пур колхозсене, резинăран тунă ытти япаласемпе танах, çавăн пекех тата государствăна панă кок-сагызăн кашни 11 центнер чĕртымарĕшĕн тонна çурă тиемелли автомашина валли пĕр комплект авторезина (камера тата покрышка) е 20 центнертĕн виçĕ тонна тиемелли автомашина валли пĕр комплект авторезина государство хакĕпе заказ памашкăн право парас.

5. План памасăрах кок-сагыз акакан колхозсенчи колхозниксене государство панă план тăрăх кок-сагыз акакан колхозсенчи колхозниксемпе пĕр пек условисемпех хавхалантармалла тăвас тесе, кок-сагыз акма государство планне паман звеносемпе колхозсенче пĕр гектартан тухăç çакăн чухлĕ пулмалла тăвас, тухăç çакăнтан ытларах пулсан, вара колхозсене резинăран тунă япаласем панипе хавхалантармалла:

Киев облаçĕ тăрăх	— 12,0	цент.
Житомир облаçĕ тăрăх	— 12,0	»
Полтава облаçĕ тăрăх	— 10,0	»
Сумы облаçĕ тăрăх	— 13,5	»
Харьков облаçĕ тăрăх	— 10,0	»
Чернигов облаçĕ тăрăх	— 13,5	»
Башкир АССР тăрăх	— 10,0	»
Воронеж облаçĕ тăрăх	— 13,0	»
Иваново облаçĕ тăрăх	— 10,0	»
Курск облаçĕ тăрăх	— 13,0	»
Куйбышев облаçĕ тăрăх	— 10,0	»
Орлов облаçĕ тăрăх	— 13,0	»
Пенза облаçĕ тăрăх	— 10,0	»
Рязань облаçĕ тăрăх	— 11,0	»
Тамбов облаçĕ тăрăх	— 11,0	»
Тула облаçĕ тăрăх	— 11,0	»
Тутар АССР тăрăх	— 11,0	»
Белорус ССР тăрăх	— 13,5	»
Казах ССР тăрăх	— 11,0	»
ССР Союзĕнчи ытти республикăсемпе облаçсем тăрăх	— 10,0	»

6. Кок-сагыз плантацийĕсенче хăйсем ĕçлекен колхозниксене ĕç тухăçлăхне хăпартма хавхалантарас тесе, колхозсене хăйсем илнĕ резинăран тунă япаласен пĕр пайне (государство хакĕпе) звеносенчи колхозниксем хушшинче, звенона çирĕплетсе панă пĕтĕм лаптăк çинчен звено валли çирĕплетнĕ планран ирттерсе кок-сагыз тымарĕсем мĕн чухлĕ панине кура, валеçме сĕнес,—ку вăл çак расчетпа пулса пымалла:

пĕр мăшăр ăшăх калуш—кок-сагызăн государствăна панă 40 килограмм тымарĕшĕн;

пĕр мăшăр тарăн калуш—кок-сагызăн государствăна панă 53 килограмм тымарĕшĕн;

пĕр мăшăр хĕрарăм боти—кок-сагызăн государствăна панă 57 килограмм тымарĕшĕн;

пĕр мăшăр резина атă—кок-сагызăн государствăна панă 157 килограмм тымарĕшĕн;

пĕр мăшăр резина подошва—кок-сагызăн государствăна панă 20 килограмм тымарĕшĕн;

пĕр комплект велорезина (покрышка тата камера)—кок-сагызăн государствăна панă 137 килограмм тымарĕшĕн.

Звенори колхозниксем хушшинче резинăран тунă япаласене кок-сагыза пăхса ӳстернĕ чухне кашни колхозник тунă ĕçкунĕсен хисепĕ тăрăх валеçмелле.

7. Бригадира бригада тăрăх тухăç планĕнчен (контрактаци) ирттерсе государствăна панă кашни центнер кок-сагыз тымарĕшĕн 4 тенкĕ преми памалла.

Бригадира преми звеносенчен çурринчен сахал мар тухăç планне ирттерсе тултарсассăн памалла.

Колхоз председательне колхоз тăрăх тухăç планĕнчен (контрактаци) ирттерсе государствăна панă кашни центнер кок-сагыз тымарĕшĕн 2 тенкĕ преми памалла.

Колхоз председателĕпе бригадира премисене колхоз тухăç планĕсенчен ирттерсе кок-сагыз тымарне государствăна панипе илнĕ суммăран памалла.

8. Колхоза председателе тата бригадирсене тухăç планĕнчен (контрактаци) ирттерсе государствăна кок-сагыз панăшăн тивĕçекен премисен 50 проценчĕ чухлĕ суммăллăх резинăран тунă япаласем памашкăн ирĕк парас.

9. Колхозниксене килвырăн участокĕнче кок-сагыз акма сĕнес.

СССР Совнаркомĕ 1937 çулти апрелĕн 16-мĕшĕнче «1937 çулта каучуконоссем акса тăвассине сармалли мероприятисем çинчен» йышăннă 626-мĕш номерлĕ постановлени, 1938 çулти июлĕн 21-мĕшĕнче «Промышленнăй каучуководствăна сарассине тата натуральнăй каучук производствине аванлатмалли мероприятисем çинчен» йышăннă 845-мĕш номерлĕ постановлени тата СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1940 çулти июлĕн 10-мĕшĕнче «Натуральнăй каучук тăвакан промышленноçăн чĕртавар базине сарасси çинчен» йышăннă 1215-мĕш номерлĕ постановлени килвырăн участокĕнче кок-сагыз акакан колхозниксем тĕлĕппе те вăйра пулмалла тăвас.

Çакăн пек йĕрке тăвас: килвырăн участокĕ çинчен кок-сагызăн чĕртымарĕсене государствăна панăшăн колхозник резинăран тунă япаласем заказ пама тата государство хакĕпе илме право илет,—ку вăл çак расчетпа пулса пымалла:

пĕр мăшăр ăшăх калуш—кок-сагызăн государствăна панă 21 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр тарăн калуш—кок-сагызăн 28 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр хĕрарăм боти—кок-сагызăн 29 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр резина атă—кок-сагызăн 82 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр мăшăр резина подошва—кок-сагызăн 10 килограмм чĕртымарĕшĕн;

пĕр комплект велорезина (покрышка тата камера)—кок-сагызăн 71 килограмм чĕртымарĕшĕн.

10. Кок-сагызăн пысăк пахалăхлă вăрлăхĕсене ӳстерсе тăвассине хавхалантарас тесе, колхозсене, кăтартса панă планран ирттерсе государствăна панă пĕрремĕш категориллĕ вăрлăхăн кашни 5 килограммĕшĕн, пĕр мăшăр калуш заказ пама тата государство хакĕпе илме ирĕк парас.

11. Колхозсене хăйсем илнĕ резинăран тунă япаласен (калушсен) 30 процентне звенори колхозниксем хушшинче государство хакĕпе, звено çумне çирĕплетнĕ вăрлăхлăх пĕтĕм лаптăк çинчен тухăç планĕнчен ирттерсе государствăна панă вăрлăх хисепĕ тăрăх, валеçме сĕнес.

Звеносенчи колхозниксем хушшинче валеçессине кок-сагыз вăрлăхĕн плантацийĕсенче ĕçлесе тунă ĕçкунĕсем тăрăх туса ирттермелле.

12. Колхоз акса тунинчен, çавăн пекех килвырăн участокĕнчи çĕр çинчен кок-сагыз тымарĕ панăшăн хăхаланлатарма резинăран тунă япаласене отчетлă çулăн ноябрĕн 1-мĕш тĕлне пĕтĕм колхозпе колхозăн пĕр членĕ пуçне вăтамран тунă ĕçкунĕсен хисепĕнчен сахал мар ĕçкунĕсем тунă колхозниксене кăна памалла.

13. Çакăн пек йĕрке тăвас: кок-сагыз продукцине панăшăн резинăран тунă япаласем туса хатĕрлеме колхозсем паракан заказсене Наркомхимпромăн «Союзрасткаучук» тресчĕ илет тата çав япаласене ку колхозсем техникăллă ытти тĕп культурăсем (сахăр кăшманĕ, йĕтĕн, кантăр тата табак) тăрăх та государство умĕнчи обязательствăсене тултарсассăн тин памалла.

14. Кок-сагызăн продуктивлă тымарĕ вăтам шутпа 30 грамм таякан тата çулталăкри чĕртымарсенче каучук вилçĕ процентран сахал мар сортне туписа ӳстернĕ селекционерсене пĕр хут преми 50 пин тенкĕ, чĕртымарсенче каучук тăватă процентран сахал мар пулсан—75 пин тенкĕ, пилĕк процентран сахал мар пулсан—100 пин тенкĕ памалла тăвас.

15. Кок-сагыз тымарĕсен тухăçне ӳстерме колхозсене çакăнне тума сĕнес:

а) кок-сагыз акма чи лайăх участоксем уйăрмалла, чи малтанах акма юрăхлă тунă торфлă вырăнсемпе, пахча вырăнĕсемпе, шыв илекен айлăмлă вырăнсемпе, удобренисем тăкса çемçетнĕ кантăр вырăнĕсемпе усă курмалла;

б) кок-сагыз плантацийĕсене йĕркелле пăхса тăмалла, вĕсене çумкурăксенчен тасатмалла тата вегетаци вăхăтĕнче 4—5 хутран сахал мар çумкурăксене çумламалла, ретсем хушшине 4 хутчен çемçетмелле, 2 хутчен апат памалла тата каучук паман одуванчиксене икĕ хутчен ятарласа çумламалла;

в) кок-сагыз культурине акса тăвас енĕпе агротехникăллă мĕнпур мероприятисене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерес шутпа кок-сагыз акакан мĕнпур лаптăксене звеносем çумне çирĕплетсе памалла.

16. Кок-сагыз тухăçне ӳстернĕшĕн тата акмалли лаптăксене аслăлатнăшăн колхозсемпе колхозниксене резина изделийĕсемпе хавхалантарас ĕçри мĕнпур расчетсене Наркомхимпром çине хурас.

Наркомхимпрома колхозсемпе тавăрсем парса расчетсем тумалли йĕрке хатĕрлеме хушас, çав йĕрке тăрăх колхозсем резина изделийĕсем пирки парăнăсене пурнăçласси, çак постановлени тăрăх, çулсеренех декабрĕн 31-мĕшĕччен пулса пымалла.

17. Наркомхимпрома тата СССР Наркомземне, çак постановлени тăрăх, кок-сагыз тымарĕсемпе вăррисене контрактаци тумалли договорта кирлĕ улшăнусем кĕртме тата контрактаци договорĕнче колхозĕпе миçе гектар акнине тата кок-сагыз тухăçне кăтартнипе пĕр вăхăтрах миçе гектар акнипе тухăçне звеносем тăрăх кăтартса пама кирлине пăхма хушас.

18. Наркомхимпрома ССР Наркомземĕпе килĕшсе çаксене тума хушас:

а) 1941 çулта складсен çуртĕрĕсемпе тата сушилкăсемпе оборудовани тунă хатĕрлев пункчĕсен хисепне 178 таран çитермелле, вăл шутран УССР тăрăх 39;

б) кок-сагыз тымарĕсенчен вăхăтра тĕрлĕрен тавăрсем туса кăларас шутпа 1941 çулта Украина ССР территорийĕнче çулталăкра 30 пин тонна кок-сагызăн чĕрĕ тымарĕсенчен тĕрлĕрен тавăрсем туса кăларакан заводсен строительствине тытăнмалла.

19. ССР Союзăн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çапла шутлаççĕ: кок-сагыз тухăçне ӳстернĕшĕн тата акмалли лаптăксене аслăлатнăшăн колхозсемпе колхозниксене резина изделийĕсене натурăпа парса хавхалантармалла туни колхозсем тата колхозниксем резина изделийĕсене ыйтнине тивĕçтерме пулăшать.

Колхоз, ăна государство планне паман тата колхозри мĕнпур звеносем мĕн чухлĕ тухăç илмелли плана (контрактацине) тултараççĕ пулсан, кок-сагыз акнă 10 гектарлă лаптăк çинче, кашни гектартан план тăрăх 15 центнер илмелле пулсан, гектартан 27 центнер кок-сагыз тымарĕ илнĕ чухне, вара государствăна планран ирттерсе 120 центнер кок-сагыз тымарĕ паратъ.

Çав колхоз колхозăн тата колхозниксен нушисем валли государство хакĕ тăрăх резинăран туса кăларнă çакнашкал изделисене заказ парса илме пултаратъ:

тонна çурăллă автомашинăсем валли авторезинăсем	— 4 комплект,
калуш	— 490 мăшăр,
резина подошва . . .	— 349 мăшăр,
резина атă	— 10 мăшăр тата
велосипед шинисем	— 10 комплект

Çак хисепрен кок-сагыз акса тăвас тĕлĕппе ĕçлекен звенори колхозниксем государство хакĕ тăрăх, 300 мăшăр калуш илеççĕ, вĕсене кок-сагыз акса тунă çĕрте ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсен хисепĕ тăрăх 256 колхозник хушшинче валеçмелле.

Колхоз председателĕ государство хакĕ тăрăх 6 мăшăр калуш, бригадир вара 4 мăшăр илет.

Колхоз, ăна государство планне паман пулсан, анчах вăл 5,40 гектарлă лаптăк çинче кок-сагыз акнă пулсан, гектартан 20 центнер тухăç илнĕ чухне государствăна 107,5 центнер кок-сагызăн чĕр тымарне парать.

Çак колхоз государство хакĕ тăрăх, резинăран туса кăларнă çакнашкал изделисене заказ парса илме пултаратъ: тонна çурăллă автомашинăсем валли авторезинăсем 8 комплект, 76 мăшăр ăшăх калуш тата 30 мăшăр тарăн калуш. Çак хисепрен кашни колхозница государство хакĕ тăрăх пĕрер мăшăр калуш, бригадир государство хакĕ тăрăх 3 мăшăр калуш, колхоз председателĕ вара 5 мăшăр илет.

Колхозник хăйĕн пахча вырăнĕнче 0,04 гектарлă лаптăк çинче кок-сагыз акнă пулсан, гектартан 30 центнер тухăç илнĕ чухне вăл резинăран туса кăларнă çакнашкал изеделисене заказ парса илме пултаратъ: 4 мăшăр калуш, хĕрарăм боти пĕр мăшăр тата резина подошвăсем 2 мăшăр.

Кок-сагыз тухăçне ӳстернĕшĕн тата акмалли лаптăксене аслăлатнăшăн колхозсене тата колхозниксене натурăпа парса хавхалантарни каучук тумалли культурăна акассине аталантармалли пысăк вăй пулса тăрать, вăл кок-сагыз лаптăкĕсене аслăлатма май парать, кок-сагыз тухăçне ӳстерет, халăх хуçалăхĕ натуральнăй каучук ыйтнине чылай тивĕçтерме пулăшать.

Телейлĕ пирĕн çамрăклăх!

1788 çулта июлĕн 16-мĕшĕнче Етĕрне хулинчи управăпа кĕçĕн земство Егор Каробов хуçа патĕнче ĕçлесе пурăнакан 21 çулхи тарçăн «ĕçне» пăхса тухнă. Вăл çамрăк—Элĕк сали сынни Прокопий Васильев ятлăскер пулнă. Ана чăвашла Очнер тесе чĕннĕ.

Мĕн туса айăпа кĕнĕ пулнă-ха çак çамрăк тарçă закон умĕнче? Суд приговорĕнче кун пирки çапла каланă: «Паян, июлĕн 16-мĕшĕнче, Пракух никам хушмасăрах хуçа картишĕнче урапа тĕнĕлĕ тума тытăннă. Вăл, ĕçленĕ вăхăтра, салтака каяссинчен çăлăнса юлас шутпа сулахай аллинчи шĕвĕр пӳрнине вăтаçĕрти сыппи таран пуртăпа касса татнă...» тенĕ. Çакăншăн суд Пракуха пушăпа çаптарма, ун хыççăн ĕмĕрлĕхех Çĕпĕре яма йышăннă.

Ку документ ĕлĕкхи çамрăксен пурнăçĕшĕн питех те характерлă. Çапла хĕнхурлă та нушаллă пулнă революцичченхи çамрăксен шăпи. Вĕсен тарçă-тĕрçĕре тертленсе пурăнса ĕмĕрне иртермелле пулнă. Çитменнине вĕсене ирĕксĕрех салтака тыта-тыта панă, салтак службинчен хăтăлса юлма шутлакансене ĕмĕрлĕхех Çĕпĕре янă. Ирĕклĕхшĕн, халăх телейĕшĕн патша правительствине хирĕç паттăрăн кĕрешекен çамрăксене тĕрмесенче çĕртнĕ. Патша саманинче ирĕк шухăшлă çамрăксемшĕн пурнăç çулĕ хупă пулнă.

Телейлĕ те савăнăçлă пирĕн Совет çĕршывĕнчи çамрăксем! Вĕсем инкек, пусмăр мĕн иккенне пĕлмеççĕ. Вĕсемшĕн кирек ăçта та пурнăç çулĕ уçă. Совет çамрăкĕсем социализм строительствин пур участокĕсенче те пагтăрăн та чыслăн ĕçлеççĕ. Вĕсем пинĕ-пиннĕпе аслă шкулсенче ĕçлеççĕ, инженерсем, врачсем, агрономсем пулма хатĕрленеççĕ. Совет çамрăкĕсенчен пиншер ученăйсем, изобретательсем, писательсем, артистсем, композиторсем т. ыт. ăстаçăсем тухаççĕ. Тăван çĕршыва сыхлас ĕçре пирĕн çамрăксем чăн-чăн паттăрлăхпа геройлăх кăтартса параççĕ. Совет çĕршывĕнчи çамрăксем, ленинла комсомолăн ретне миллионшăрăн пĕрлешĕнсе, политикăллă воспитани илеççĕ, тăван çĕршывăн мухтавлă хуçисем пулма хатĕрленеççĕ.

Хисеплĕ те мухтавлă социализмлă çĕршывра чечекленекен çамрăклăх! Телейлĕ çамрăксем çинчен акă мĕнле юрăсем янтратаççĕ колхозсенче каччăсемпе хĕрсем:

Ыраш вырнă вырăнсем,
Утă çулнă çарансем;
Машина пек кĕрлесе
Иртет çамрăк вăхăтсем.

Шур перчетке кам аллинче?
Хĕрпе каччă аллинче.
Эпир хамăр кам аллинче?
Совет власĕ аллинче!

Чăн каласçĕ çамрăксем! Вĕсен телейлĕ пурнăçĕ пĕтĕмĕшпех тăван çĕршыв пархатарлăхĕпе, партипе правительство тăрăшса пăхса ӳстернипе ешерсе чечекленет. Çавăнпа вĕсен пуçĕ çинче пурнăç çулне уçас асап выртмасть. Совет власĕ вăл çула уçса панă,—тăрăш, вĕрен, ĕçле, мухтава тух, хисеплĕ гражданин пул. Пирĕн çамрăксем, хăйсен чĕрисенче çак тĕллевсене тытса пурнаканскерсем, Аслă Сталин саманинче пур енчен те тивĕçлĕ пулма ĕмĕтленеççĕ. Вĕсем çак шутпа комсомол ретĕнче ĕçлесе пиçсе коммунистла воспитани илеççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ çамрăклăх çинчен калакан сăвă-юрăсем хушшинче комсомол çинчен хунă такмаксем питех те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Акă вăл такмаксен хăшпĕр тĕслĕхĕсем:

Ман пуçăмри пурçăн тутăр
Савнă тусăн парнийĕ.
Начар тесе ан каласăр,—
Эп комсомол савнийĕ.

Ман чĕрçитти бардовой,
Ку лавкари сицă мар.
Манăн тусăм комсомолец,
Пули-пулми каччă мар.

Ку йĕркесенчен эпир ялта (колхозра) чи хисеплĕ çамрăксем комсомолецсем шутланнине куратпăр. Комсомолецсем—хисеплĕ çынсем, вĕсем çумĕнче хĕрупраççем те хăйсене хисеплĕ тесе шутлаççĕ. Комсомолпа тус пуласси ялти хĕрсемшĕн чи пысăк чыс мĕн. Мĕншĕн тесен, комсомолпа тус пулсан, ьĕренме те, ĕçлеме те, телейлĕ пурнăçпа пурăнма та çул уçă. Ана эпир çак примерсенчен лайăх куратпăр:

Манăн тусăм комсомолец
Тракторист пулма сĕнет.
Хăйпеле пĕрле мана та
Вĕренме пыма чĕнет.

Пуçлă-вĕçлĕ анана
Вырма лайăх теççĕ.
Комсомолпа тус пулсан
Вренме лайăх теççĕ.

Йăмралăхра ик туйра,
Çӳлçи пĕр пек сарлинччĕ
Комсомолец тусăмпа
Ĕмĕр пĕр пек иртинччĕ.

Ялти чи маттур каччăсемпе—комсомолецсемпе туслă пурăнакан хĕрсем хăйсем те çавтери маттур. Вĕсен пичĕ-куçĕсем пиçсе çитнĕ çырла пек, кăмăлĕсем ăшă хĕвел пек; çӳрессе вĕсем ĕлĕкхи вăхăтри пек çĕтĕк-çатăк тăхăнса çӳремеççĕ ĕнтĕ,—вĕсем çийĕнче кашниннех таса тум:

Çырма тăрăх çырла пухрăм
Шыв сулхăнпе уçăлса;
Савнă туспа вăйăа тухрăм
Пурçăн кĕпе тăхăнса.

Шĕлтĕр-шĕлтĕр тăкăнаççĕ
Вĕренленĕн çӳлçисем;
Пурçăн кĕпе тăхăнаççĕ
Пирĕн колхоз хĕрĕсем.

Крыльца çинче кам тăратъ
Шур явлăклă хĕр тăратъ.
Пичĕ-куçĕ йăл кулать,
Çамрăк чуна йăпатать.

Пирĕн çĕршыв хăйĕн мухтавлă ывăлĕ-хĕрĕсене нихăçан та манмасть. Партипе правительство ĕçре хисепе тухнă сынсене яланах хавхалантараççĕ, орденсем парса чыс тăваççĕ.

Пирĕн тĕлте тополь пур,
Тополь çинче куккук пур
Çакă колхоз каччисен
Умĕсенче орден пур.

Пурçăн кĕпен арки вĕçĕ
Çилпе вĕл-вĕл вĕлкĕшет.
Манăн савни чаплă ĕçĕшĕн
Мускава кайса килет.

Савăнса, хĕпĕртесе ĕçлеççĕ совет çамрăкĕсем колхоз производствинче, савăнса, хĕпĕртесе ирттереççĕ хăйсен пушă вăхăтĕсене. Çĕнĕлле йĕркелесе пыраççĕ вĕсем хăйсен пурнăçне, йăлисене. Çамрăксем хушшинче ĕлĕкхи тискерлĕхсем — каччăсем хĕрсенчен мăшкăласа куласси, пуян та «сумлă» каччăсем чухăнсенчен тăрăхласси халĕ асра та çук ĕнтĕ. Хĕрсем хăйсен прависене питех те лайăх пĕлсе тăраççĕ. Вĕсем çапла савăласа такмакласçĕ:

Пĕтĕн акнă хирсене
Утсем кĕртсе ан ишĕр
Кучухнехи хĕрсене
Пӳрнепе те ан тĕкĕр.

Шыв хĕрринче çӳресен те
Ура шыва каяс çук.
Куштан мана сăнасан та
Эп куштана савас çук.

Шур пĕркенчĕк пĕркенмешкĕн
Халĕ кивĕ йăла мар.
Çĕнĕлле туйсем тăватпăр, —
Кивви интереснă мар.

Колхоз çамрăкĕсене социализмлă уй-хирсенче стахановла ĕçленĕ хыççăн выляни-кулни те, юрлани-ташлани те килĕшет, мĕншĕн тесен кам стахановла ĕçлет, вăл культурăллăн канма тивĕçлĕ. Уи çинчен пирĕн çамрăксем çапла такмаксем шăрантараççĕ·

Ирсерен ял хыçĕнче
Трактор суха сухалать.
Кулленхи ĕç хыçĕнчен
Савни купăсне калать.

Чăнкăр-чăнкăр чăн йĕвенне
Чăнкăртатни кил

Ӳсет те çирĕпленет колхоз

Канаш районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозшăн 1940 çул—пысăк тухăçлă тырпул туса илес тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе чаплă çитĕнӳсем тунă çулталăк пулса тăчĕ.

1939—40 çулти агротехникăллă мероприятисен планне колхоз ăнăçлăн тултарнă. Пĕр çул хушшинче кăна колхоз уя çирĕм çичĕ пин лав ытларах тислĕкпе торф кăларнă. Юр тытнă участоксенче юр хулăмĕшĕ 100 сантиметра çити пулнă. Çав вăхăтра юр тытман вырăнсенче юр хулăнĕшĕ 20—30 сантиметртан мала пулман.

Агротехникăллă мероприятисене вăхăтра тата вăхăтра пурнăçа кĕртсе пынине пула колхоз иртнĕ çулта начар мар тухăçлă тĕштырă туса илнĕ. Вăтам шутпа кашни гектартан 14,5 центнер пăрça, 17,5 центнер сĕлĕ, 22 центнер пăри, 33 центнер урпа, ултă гектарлă участок çинче кашни гектартан 54 центнер урпа пуçтарса кĕнĕ.

Юр тытни тырпул тухăçне пысăккăн ӳстернине çак пример та аван кăтартса парать: юр тытнă участокра кашни гектартан 33 центнер урпа туса илнĕ пулсан, юр тытман вырăнта урпа тухăçĕ 18—20 центнер кăна пулнă.

Киров ячĕпе тăракан колхоз пахча-çимĕçсем лартса тăвас тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлет. Пахча-çимĕçсем валли 5 гектарлă çĕр лаптăкĕ уйăрнă. Çак участок çинче кашни гектартан 490 центнер купăста, 485 центнер хĕрлĕ кăшман, 300 центнер помидор, 400 центнер хăяр туса илнĕ. Пахча-çимĕçсем сутса колхоз 81 пин тенкĕ ытларах тупăш илнĕ. Кунсăр пуçне кашни ĕçкунĕ тăрăх колхозниксене 9 килограмм пахча-çимĕç валеçсе панă.

Колхозăн тупăшĕ çулран-çул ӳссе пырать. 1939 çулта укçан илнĕ тупăш 103 пин тенкĕ шутланнă пулсан, 1940 çулта вара 149 пин тенкĕ укçан тупăш илнĕ. Çавна май ĕçкунĕсем тăрăх валеçĕнекен тупăш та хăпарса пырать. 1939 çулта кашни ĕçкунĕ тăрăх иккĕр килограмм тĕштырă валеçсе панă пулсан, 1940 çулта колхозниксемпе колхозницăсем кашни ĕçкунĕ тăрăх 5-шер килограмм ытларах тĕштырă, 9 килограмм пахча-çимĕç, 1,4 килограмм çĕрулми, килограмм çурă хĕрлĕ кăшман тата 60 пус укçан илнĕ.

Çапла колхозниксемпе колхозницăсем тулăхлă пурăнăçпа пурăнаççĕ. Вĕсен тĕштырă та, пахча-çимĕçсем те çителĕклĕ. Сăмахран, М. Афанасьев çемьи (3 çын) 1168 ĕçкупĕшĕн 365 пăт тырă, 657 пăт пахча-çимĕç, 110 пăт çĕрулми, 120 пăт хĕрлĕ кăшман, 701 тенкĕ укçан илнĕ. Çакнашкал çемьесене татах та кăтартса пама пулать, вĕсем колхозра сахам мар.

Колхозăн тăватă ферма: сĕт-çу, сурăх, чăх-чĕп тата лаша ферми. Çак фермăсенче выльăхсем туянмалли плана тултарнă. Хальхи вăхăтра тăватă фермăра 629 пуç выльăх шутланать. Выльăхсем валли норма тăрăх апат çителĕклĕ уйăрнă.

Киров ячĕпе тăракан колхоз кăçалхи агротехникăллă мероприятисен планне начар мар тултарса пырать. Мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсем тырпул тухăçлăхне ӳстерме пулăшакан ĕçсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа тума тăрăшаççĕ. План тăрăх, колхозăн 220 гектар çинче юр тытмалла пулсан, 330 гектар ытларах тытнă. 10.500 лав торф хатĕрлес вырăнне 15.575 лав хатĕрленĕ. Мĕнпур вăрлăхсене акма юрăхлă кондицине çитернĕ. Пăрçапа урпа вăрлăхĕсене пĕрремĕш класа, пăтти вăрлăхсене иккĕмĕш класа лартнă. Транспорт хуçалăхне йĕркене кĕртнĕ. Лаша кӳлмелли хатĕрсем 110 комплект кирлĕ пулсан, 170 комплект хатĕрленĕ. Лашасем çирĕп те мăнтăр.

Çапла вара, пĕр сăмахпа каласан, Киров ячĕпе тăракан колхоз çуракине хатĕрленсе çитнĕ теме юрать. Колхозра стахановла пĕр шкул тата тепĕр агрокружок организацилеленĕ. Стахановла шкулта 27 çын, агрокружокра 95 çын вĕренет. Занятисем йĕркеллĕ пулса пыраççĕ. Стахановла шкулăн занятийĕсенче колхозри стахановецсем хăйсен çитĕнĕвĕсем çинчен лекцисем вуласа параççĕ.

Колхозăн пайланман тупăмĕ çулран-çул ӳссе, вăйланса пырать. Хальхи вăхăтра колхозăн 1100 пуç чăх-чĕп вырнаçмаллăх стандартлă вите, ĕне-витисем — 2, лаша витисем—4, конюхсем выртса тăмалли пĕр пӳрт, 80 тонна пахча-çимĕç усрамалли подвал, 10 пин центнер хума 18 амбар, пăрусене усрамалли икĕ вите т. ыт. те пур.

Халĕ колхозра 1941 çул валли производствăлла план тăваççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем план тăрăх, кăçал 3000 центнер тĕштырă усрама пĕр хранилище, 86 сурăх вырăнаçмаллăх тепĕр вите, пĕр изолятор, клуб (унтах калаçакан кино пулмалла), икĕ чуллă шыв арманĕ лартма тата çил арманне юсама палăртнă. Çаксем валли 300 кубла метр йывăç хатĕрленĕ те ĕнтĕ.

Колхозниксем кăçал вăтам шутпа кашни гектартан 17 центнер ыраш, 25 центнер сĕлĕ, 18 центнер çурхи тулă, 17 центнер пăрça, 35 центнер урпа, 30 центнер пăри, 25 центнер кĕрхи тулă туса илес задача лартнă. Бригадăсем, колхозниксемпе колхозницăсем çакăншăн кĕрешеççĕ те.

Т. НИКИТИН.
Чăваш АССР Наркомземĕн агрономĕ.

Вăрлăхсен пахалăхĕ начар

ИЕПРЕÇ. Вăрлăх пахалăхĕ вăйлă тырпул туса илес çĕрте палăк вырăн йышăнса тăрать. Вăрлăх фондне çителĕклĕнех тултарса, вĕсен пахалăхне тĕрĕслемелле.

Районра вăрлăх фондне хывса çитермен: 8 колхозра 1823 центнер çĕрулми вăрлăхĕ, 34 колхозра 189 центнер клевер, 16 колхозра 72 центнер йĕтĕн, 81 центнер т. ытти культура вăрлăхĕсем çитмеççĕ. Çĕрулми вăрлăхĕ ситменни хăшпĕр колхозсем питĕ япăх ĕçлесе пынинчен килсе тухнă. Акă, «Победа» колхозăн 353 центнер, «Красный водник» колхозăн 474 центнер, «Чувашия» колхозăн 457 центнер çитмест. Çак колхозсем çĕрулми лартса тăвас тĕлĕшпе питĕ начар ĕçленĕ.

Колхоз председателĕсем вăрлăх ситменнине пĕлсе тăнă çĕртех вăрлăх тупма тăрăшмаççĕ. Халĕ вăрлăх тупма çăмăл. «Тымар», «Комбайн» колхозсенче чипер çĕрулмисенех выльăхсене параççĕ, анчах та ку колхозсенчен çĕрулми вăрлăхлăх илес пирки никам та шутламасть-ха.

Контрольно-семенной лабораторинче вăрлăхсене тĕрĕслес ĕç тимлĕн пыраять. Кашни кунах колхозсенчи вăрлăхсене тĕрĕслеме пырса параççĕ. Тĕрĕсленĕ хыççăн акă мĕн курăнать: 2682 центнер çурхи тулăран 1012 центнер, 375 центнер хура тулăран 276 центнер, 195 центнер ясмăкран 175 центнер, 883 цент. пăрçаран 468 центнер таса мар. Вăрлăхсем пахалăхне çухатнă пирки те акма юрăхсăр. Çакă ĕнтĕ вăл вăрлăхсене тасатас ĕçе çителĕклĕ йĕркелемеллинчен килнĕ. Хăшпĕр колхозсем çакăн çине тĕплĕн пăхмаççĕ, ятне анчах тăваççĕ. Савкка ялсоветне кĕрекен тата вăрманти хăшпĕр колхозсем паянхи кунченех вăрлăх тасатма тытăнман.

Йĕпреç колхозĕнче тата «Заря», «Комбайн», «XVII партсъезд» колхозсенче вăрлăхсен пахалăхĕ ытла та начар. Йĕпреç колхозăн тулă вăрлăхĕн шăтас пахалăхĕ 35 процент анчах, пăрçи те паха мар: шăнса хытса ларнă. Ку колхозăн нимĕнле культура тăрăх та аллаcа хатĕрлесе хунă вăрлăх çук. Колхоз председателĕ Слаборуков çак ответлĕ ĕç çине сӳрĕккĕн пăхать.

«Комбайн» колхозăн та лайăх вăрлăх çук. Вăрлăхсем чĕрĕ пулнă пирки кăмака çинче типĕтнĕрен шăтас пахалăхне çухатнă. Ку колхозра та вăрлăх шырама тытăнман.

Вăрлăх начар колхозсем татах та пур, анчах та вăрлăх тупасчĕ, вăрлăх хатĕрлесе хурасчĕ текен председательсем сахал.

Пахча-çимĕç вăрлăхĕсем кăçал та çитмеççĕ. Шырасан хăшпĕр çимĕççен вăрлăхĕсене районрах тупма пулать. Кун пирки те колхоз руководителĕсем хускалмаççĕ-ха. Çакна каламалла: «Сортсемовощь» халĕ те вăрлăхсене сутма тытăнман. Йĕпреç районĕнчи чылай колхозсем Канаш хулине пахча-çимĕç вăрлăхĕсем патне кайсан унтан ахалех çавăнса килнĕ.

Вăрлăхсене хатĕрлессине йĕркелесе çитермелле. Вăхăт пур, вăрлăхсем пулĕç, тени пулмалла мар.

Агроном **В. ЗАХАРОВ.**

Шупашкар районĕнче çуракине япăх хатĕрленеççĕ

Шупашкар районĕнче çуракине хатĕрленес ĕç çителĕкĕсĕр пулса пырать. Паянхи куна пĕрчĕллĕ культурăсен вăрлăхне хывас плана 95 процент, çĕрулми—96 процент, клевер—38 процент кăна тултарнă. Районра триерсем пĕтĕмпе 23 шутланаççĕ пулсан та вăрлăх алласа тасатас ĕç калама çук япăх пырать. Хăшпĕр колхозсенче вăрлăха аллама халĕ те тытăнман. Районри виçĕ колхозра 7,5 гектар çинчен пухса илнĕ клевера çапман. Колхозсем пĕрпĕрин хушшинче вăрлăхсем улăштарас плана 18 процент çеç тултарнă.

Вырăнти удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлени çук. Ун тислĕк тăкас плана 46,2 процент, торф хатĕрлессине—62,5 процент, минеральнăй удобренисем кӳрсе килессине—55 процент анчах тултарнă.

МТ Станцинче тракторсене юсас ĕçе начар организацилеленĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕç малалла та çакăн пек пулса пынине тӳсме çук. Шупашкар райсовет исполкомĕпе райсĕрĕç пайĕн тата МТ Станцин çуракине хатĕрленес ĕçе хăвăртлатас енĕпе ырми-канми ĕçлемелле.

А. АНТИПОВА.

Колхоз председателĕсем улшăннă чухне ĕççемпе пурлăхсене парас тата йышăнас йĕрке

Чăваш республикинчи чылай колхозсенче председательсем улшăннă чухне ялхуçалăх артель членĕсен пĕрлехи пухăвĕсенче отчетсем туса паман. Хăшпĕр çĕрте ĕçрен тухакан председатель çĕнĕрен суйланă председателе колхоз пичетне панипех хăйне ĕçрен хăтăлнă тесе шутланă, колхоз ĕçĕсенĕ тата обществăллă пурлăха акт тăрăх парса хăварман.

Акă, сăмахран, Тельман ячĕпе тăракан колхоз (Канаш р.) председателĕ пулнă Ильин колхоз ĕçĕсене тата пурлăхне çĕнĕрен суйланă председателе Фаланин юлташа вăхăтра паман. Каярахпа, тĕрĕсленĕ хыççăн, Ильин колхоз председателĕнче ĕçленĕ вăхăтра колхозăн пĕр ĕни çухални, вылăх вити лартма хатĕрленĕ материалсенĕ, колхоз ялăсене вăрласа пĕтерни палăрнă. Кунсăр пуçне тата выльăх апатнĕ салатса янă, пĕр гектар çурă участок çинчен пăтнă кантăра çĕртсе янă. Ильин ĕçе ялăхтарса янине пула колхоз нумай çинен курнă. Çапах та Ильина ответ тыттарни пулман.

Тăвай районĕнчи «Трудовой путь» колхозăн председателĕнче А. Прокопьев пулнă. Вăл колхоз ĕçне ялăхтарса янă. Çавăнтăн ăна ĕçрен кăларнă. Анчах А. Прокопьев çĕнĕ председателе Кузнецов юлташа колхоз правленин пичетне кăна парса хăварнă.

Ленин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнче (Элĕк районĕ) икĕ çул хушшинче виçĕ председатель улшăннă. Вĕсенчен пĕри те колхоз ĕçĕсене тата пурлăхне çĕнĕрен суйланă председателе акт тăрăх парса хăварман. Ялхуçалăх артелĕн ĕçĕсемпе пурлăхĕсем çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхман пирки ку колхозра 1939 çулта сыснасем нумай вилнĕ, пĕр сысна çухалнă, 1940 çулта лашасем тата сыснасем чылай вилнĕ, виçĕ сысна тата икĕ сурăх çухалнă. Çавăнпа пĕрлех колхозăн производствăлла планĕпе тума палăртнă агротехникăллă ĕççемпе пурнăçа кĕртмен, кун пирки тырпул начар пулнă.

Районри организацисем тата ялсоветĕсем колхоз председателĕсем улшăннă чухне ĕççене тата обществăллă пурлăха акт тăрăх парса хăварманнине пĕлсе тăнă, анчах колхозсенчи çавăн пек йĕркесĕрлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыма тăрăшман, çĕнĕрен суйланă председательсене колхозсенчи ситменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме мĕнпур колхозсене мобилизацилеме пулăшман.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ нумай пулмасть колхоз председателĕсем улшăннă чухне ĕççемпе обществăллă пурлăхсене парас тата йышăнас йĕрке çинчен сӳтсе-явăç. Колхоз председателĕсен ялхуçалăх артелĕсен обществăллă харпăрлăхне сыхласа усрас, колхоз ĕçĕшĕн ответлăха ӳстерес тата дисциплинăна çирĕплетес шутпа, ЧАССР Совнаркомĕ тата ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ председательсем улшăннă чухне колхоз ĕçĕсемпе обществăллă пурлăхсене акт тăрăх парасси пирки çирĕп йĕрке тума палăртрĕç.

Колхоз правленин кивĕ председателĕ ĕçрен тухнă чухне çĕнĕрен суйланă председателе ялхуçалăх артелĕн пĕтĕм ĕçĕсене тата обществăллă пурлăхне акт тăрăх парса хăварнă. Ĕççемпе тата пурлăха пĕрин аллинчен теприне панă çĕрте районри çĕрĕç отделĕн представителĕ тата ялсоветĕн председателĕ пулнă.

Ĕççемпе пурлăхсене пани тата йышăнни çинчен çырнă актра çав куна колхозра ĕçсем мĕнле тăнине тĕплĕн кăтартас пулать, çаван пекех колхозри ситменлĕхсене, хуçасăрлăха тата кивĕ ревсĕр ĕççем тунисене пĕтĕмпех палăртмалла.

Акт çине ялхуçалăх артелĕн обществăллă хуçалăхĕ мĕнлине çырмалла: фермăсенче выльăхсем, ялхуçалăх машинисем, çуна-урапа, ут таврашĕ мĕн чухлине тата мĕнлине, çуртйĕрсем, страхозой, вăрлăхлăх тата пайланман фондсем мĕнлине кăтартмалла.

Колхоз государство умĕнчи тĕрлĕ обязательствăсене мĕнле тултарнине, тырпул туса илес, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, çуртйĕр лартас тĕлĕшпе плана мĕнле тултарнине т. ыт. те акт çине çырмалла.

Çаван пекех акт çинче колхозăн укçа-тенки мĕн чухлине, приходпа расход сметине мĕнле пурнăçа кĕртнине, учетпа отчет ĕçĕ мĕнле тăнине кăтартас пулать.

Колхоз ĕçĕсемпе пурлăхне пани тата йышăнни çинчен çырнă актпа пурлăха çырса тухнă опиç çине, ревизи комисси вывочĕсем тата колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче хушса панисем çине ĕçрен тухакан председателĕн, çĕнĕрен суйланă председателĕн, райçĕрĕç пайĕн представителĕне ялсовет председателĕн алă пусмалла.

Колхозсен ĕçĕсемпе обществăллă пурлăхĕсене пани тата йышăнни çинчен çырнă актра черетри кампанисене ирттерме (çуракине, тырпулсене пухса кĕртме, выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма т. ыт. те) мĕнле хатĕрленнине кăтартас пулать. Колхозра ертсе пырас ĕçри кадрсем (ферма заведующийĕсем, звеноводсем, счетоводсем тата ыт. те) пурте пуррипе çуккине акт çинче палăртмалла. Колхоз членĕсен списокне туса, ăна актпа пĕрле çĕлесе лартмалла.

Ĕççемпе обществăллă пурлăха кивĕ председательрен илсе çĕнĕрен суйланине парас умĕн ялхуçалăх артелĕн ревизи комиссийĕн правлени ĕçне ревизи тăвас пулать. Çаван чухне пĕтĕм пурлăха çĕнĕрен çырса тухмалла. Çĕнĕрен суйланнă председателĕн пурлăха çырса тухнă çĕрте хăйĕн пулса, мĕнпур пурлăха тĕрĕслесе тухас пулать.

Колхоз ĕçĕсемпе пурлăха пани тата йышăнни çинчен акт çырсан, ялхуçалăх артелĕн членĕсен пĕрлехи пухăвне пуçтармалла. Унта колхозăн кивĕ председателĕ хăйĕн ĕçĕсем çинчен отчет туса памалла, ревизи комисси ревизи актне тата выводсене вуласа кăтартмалла. Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ отчет тăрăх тата ревизи комисси каласа панă тăрăх тивĕçлĕ решени йышăнмалла.

Ĕççемпе пурлăх пани тата йышăнни çинчен çырнă актпа пурлăха çырса тухнă опиç çине, ревизи комисси вывочĕсем тата колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче ĕçленĕ вăхăтра колхозăн пĕр ĕни çухални, вылăх вити лартма хатĕрленĕ материалсенĕ, колхоз ялăсене вăрласа пĕтерни палăрнă. Кунсăр пуçне тата выльăх апатнĕ салатса янă, пĕр гектар çурă участок çинчен пăтнă кантăра çĕртсе янă. Ильин ĕçе ялăхтарса янине пула колхоз нумай çинен курнă. Çапах та Ильина ответ тыттарни пулман.

Тăвай районĕнчи «Трудовой путь» колхозăн председателĕнче А. Прокопьев пулнă. Вăл колхоз ĕçне ялăхтарса янă. Çавăнтăн ăна ĕçрен кăларнă. Анчах А. Прокопьев çĕнĕ председателе Кузнецов юлташа колхоз правленин пичетне кăна парса хăварнă.

Ленин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнче (Элĕк районĕ) икĕ çул хушшинче виçĕ председатель улшăннă. Вĕсенчен пĕри те колхоз ĕçĕсене тата пурлăхне çĕнĕрен суйланă председателе акт тăрăх парса хăварман. Ялхуçалăх артелĕн ĕçĕсемпе пурлăхĕсем çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхман пирки ку колхозра 1939 çулта сыснасем нумай вилнĕ, пĕр сысна çухалнă, 1940 çулта лашасем тата сыснасем чылай вилнĕ, виçĕ сысна тата икĕ сурăх çухалнă. Çавăнпа пĕрлех колхозăн производствăлла планĕпе тума палăртнă агротехникăллă ĕççемпе пурнăçа кĕртмен, кун пирки тырпул начар пулнă.

Районри организацисем тата ялсоветĕсем колхоз председателĕсем улшăннă чухне ĕççене тата обществăллă пурлăха акт тăрăх парса хăварманнине пĕлсе тăнă, анчах колхозсенчи çавăн пек йĕркесĕрлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыма тăрăшман, çĕнĕрен суйланă председательсене колхозсенчи ситменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме мĕнпур колхозсене мобилизацилеме пулăшман.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ нумай пулмасть колхоз председателĕсем улшăннă чухне ĕççемпе обществăллă пурлăхсене парас тата йышăнас йĕрке çинчен сӳтсе-явăç. Колхоз председателĕсен ялхуçалăх артелĕсен обществăллă харпăрлăхне сыхласа усрас, колхоз ĕçĕшĕн ответлăха ӳстерес тата дисциплинăна çирĕплетес шутпа, ЧАССР Совнаркомĕ тата ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ председательсем улшăннă чухне колхоз ĕçĕсемпе обществăллă пурлăхсене акт тăрăх парасси пирки çирĕп йĕрке тума палăртрĕç.

Колхоз правленин кивĕ председателĕ ĕçрен тухнă чухне çĕнĕрен суйланă председателе ялхуçалăх артелĕн пĕтĕм ĕçĕсене тата обществăллă пурлăхне акт тăрăх парса хăварнă. Ĕççемпе тата пурлăха пĕрин аллинчен теприне панă çĕрте районри çĕрĕç отделĕн представителĕ тата ялсоветĕн председателĕ пулнă.

Ĕççемпе пурлăхсене пани тата йышăнни çинчен çырнă актра çав куна колхозра ĕçсем мĕнле тăнине тĕплĕн кăтартас пулать, çаван пекех колхозри ситменлĕхсене, хуçасăрлăха тата кивĕ ревсĕр ĕççем тунисене пĕтĕмпех палăртмалла.

Акт çине ялхуçалăх артелĕн обществăллă хуçалăхĕ мĕнлине çырмалла: фермăсенче выльăхсем, ялхуçалăх машинисем, çуна-урапа, ут таврашĕ мĕн чухлине тата мĕнлине, çуртйĕрсем, страхозой, вăрлăхлăх тата пайланман фондсем мĕнлине кăтартмалла.

Колхоз государство умĕнчи тĕрлĕ обязательствăсене мĕнле тултарнине, тырпул туса илес, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, çуртйĕр лартас тĕлĕшпе плана мĕнле тултарнине т. ыт. те акт çине çырмалла.

Çаван пекех акт çинче колхозăн укçа-тенки мĕн чухлине, приходпа расход сметине мĕнле пурнăçа кĕртнине, учетпа отчет ĕçĕ мĕнле тăнине кăтартас пулать.

Колхоз ĕçĕсемпе пурлăхне пани тата йышăнни çинчен çырнă актпа пурлăха çырса тухнă опиç çине, ревизи комисси вывочĕсем тата колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче хушса панисем çине ĕçрен тухакан председателĕн, çĕнĕрен суйланă председателĕн, райçĕрĕç пайĕн представителĕне ялсовет председателĕн алă пусмалла.

Колхозсен ĕçĕсемпе обществăллă пурлăхĕсене пани тата йышăнни çинчен çырнă актра черетри кампанисене ирттерме (çуракине, тырпулсене пухса кĕртме, выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма т. ыт. те) мĕнле хатĕрленнине кăтартас пулать. Колхозра ертсе пырас ĕçри кадрсем (ферма заведующийĕсем, звеноводсем, счетоводсем тата ыт. те) пурте пуррипе çуккине акт çинче палăртмалла. Колхоз членĕсен списокне туса, ăна актпа пĕрле çĕлесе лартмалла.

Ĕççемпе обществăллă пурлăха кивĕ председательрен илсе çĕнĕрен суйланине парас умĕн ялхуçалăх артелĕн ревизи комиссийĕн правлени ĕçне ревизи тăвас пулать. Çаван чухне пĕтĕм пурлăха çĕнĕрен çырса тухмалла. Çĕнĕрен суйланнă председателĕн пурлăха çырса тухнă çĕрте хăйĕн пулса, мĕнпур пурлăха тĕрĕслесе тухас пулать.

Колхоз ĕçĕсемпе пурлăха пани тата йышăнни çинчен акт çырсан, ялхуçалăх артелĕн членĕсен пĕрлехи пухăвне пуçтармалла. Унта колхозăн кивĕ председателĕ хăйĕн ĕçĕсем çинчен отчет туса памалла, ревизи комисси ревизи актне тата выводсене вуласа кăтартмалла. Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ отчет тăрăх тата ревизи комисси каласа панă тăрăх тивĕçлĕ решени йышăнмалла.

Ĕççемпе пурлăх

Англири çулсенчен пĕринче вырнаçтарса лартнă пулемет йăви.
ТАСС фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

„Дейли уоркер“ хаçата хупнине хирĕç протеслеççĕ

ЛОНДОН, февралĕн 27-мĕш. (ТАСС). Машиностроительсен профсоюзĕн Манчестер округĕнчи комитечĕ «Дейли уоркер» хаçата хупнине хирĕç протестлесе резолюци йышăннă. Шотландири промышленноçлă хуласенчи — Клайдбанкри, Гринокри тата Килмарнокри, çĕркăмăк центрĕнчи — Барнслири (Йорк графстви) тата чугунçулсен пысăк центрĕнчи — Дербири профсоюзсен совечĕсем те, çавăн пекех лейбористла партине Гортонри (Манчестер) отделенийĕ те çавнашкал резолюцисем йышăннă. Кăнтăр Уэльсра «Дейли уоркер» хаçата хупнине хирĕç протест тăвакан резолюцисене Кăнтăр-Уэльсри горняксен федерацийĕн 24 отделенийĕ, профсоюзсен икĕ совечĕ, хурçă шăратакан тата тимĕр-тăмăр ĕçлекен промышленноçри рабочисен профсоюзĕн тăватă отделенийĕ тата профсоюзсен ытти организацийĕсем те йышăннă. Нумаях пулмасть Лондонра митинг пулнă, унта «Дейли уоркер» хаçата хӳтлесе 226 фунт стерлинг пухнă.

„Ници-Ници“ хаçат Таипе Индо-Китай хушшинчи калаçусем çинчен

ТОКИО, февралĕн 28-мĕш. (ТАСС). Таипе Индо-Китай хушшинче Токиора пыракан калаçусем пирки «Ници-Ници» хаçат çапла çырать: Токиори мирлĕ калаçусем татах та пĕр-икĕ куна пыраççĕ-ха. Анчах та обстановка ытларах та ытларах йывăрланса пыннине кура, калаçусенчен мĕнле те пулин лайăх результатсем пуласса шанма çук. Çакна шута илсе, тет хаçат, Япони резиденчĕсене васкавлăнах Франци Индо-Китайĕнчен урăх çĕре куçарса кайма Ханойри генеральнăй консула распоряжени панă. Франци Индо-Китайĕн представителĕсем хăйсем мĕнле позици йышăнса тăни çинчен халĕ те уçăмлă ответ паман-ха. «Франци Индо-Китайĕ Япони сĕнĕвĕсемпе килĕшмесен, çав сĕнӳсене пурнăçа кĕртме чăрмантарать пулсан, — тет хаçат, — Япони правительстви икĕ çĕршыв хушшинче перемири тумалли плана практикăра пурнăçа кĕртме тытăнать».

КĔСКЕН

* США çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка çарĕнче 867 пин çын шутланать.

* Канзас-ситире (США) Англи летчикĕсем пит çӳлте вĕçмелле туса хатĕрленĕ тăватă моторлă самолетсемпе вĕçме вĕренеççĕ.

* Франци Хĕвеланăç Африки тăрăх икĕ эрне хушши çӳренĕ хыççăн Вейган генерал самолетпа Алжира пынă.

* Официальнăй даннăйсем тăрăх, Японире 1939 çулти июль уйăхĕнчен пуçласа 1940 çулти июль уйăхне çитиччен 8 пин предприятире, инкек-синкексем пулнипе, 594.150 çын пĕтнĕ тата аманнă, çакă вăл пĕтĕм рабочисен хисепĕнчен 27 процент пулать. 1938—1939 çулсенчи çав вăхăтпа танлаштарсан инкек-синкек курнисен хисепĕ 153.000 çынна çити ӳснĕ.

* Италире атă-пушмак тăвакан фабрикăсене атă-пушмаксене стандартпа кăна туса кăларма хушнă.

* Ганна хулинчи (Франция) çар судĕ пĕр армейски офицера 10 çул хушши тата тинĕс офицерне — 22 çул хушши тĕрмере хупса усрамалла тунă, вĕсене войскăсенче де Голль генерал майлă пропаганда тунăшăн аййăпланă.

* США правительстви тинĕс комиссийĕн представителĕсем çапла пĕлтернĕ: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем сахалтан та 9 уйăх хушши хăйсен суту-илӳ тумалли судписене Англие пама пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен вăл суднăсем США-на стратегиллĕ материалсене турттарма кирлĕ. США-н суту-илӳ флотĕнче 1.276 судно шутланать, вĕсенчен 377-шĕ тулашра суту-илӳ енĕпе ĕçлеççĕ.

* Брайтон хулинчи (Англия) халăхсем хулара продовольстви енĕпе «хура биржа» туса хунишĕн хыттăн тарăхаççĕ. Тĕрĕслеме хыççăн, çакă курăннă: çав «биржăра» хаклă хакпа кирек мĕнле продуктсем те туянма пулать.

—o—

Хутла пĕлменнисене вĕрентеççĕ

ÇЕРПУ. Иккĕмĕш Вăрманкасси ялсоветне кĕрекен «Çĕнĕ вăй» колхозра хутла пĕлменнисене пурне те вĕрентме тытăннă. Ку ĕçре комсомолецсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Н. Ефимов тата М. Иванов комсомолецсем уйрăмах лайăх ĕçлесе пыраççĕ.

Д. Кириллов.

Европăри тата Африкăри сăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Ытларах активлă ĕçсем Хĕвелтухăç Африкăра пулса пынă. Итали Сомалийĕнче, тенĕ Итали командованийĕн сводкинче, Итали войскисем Могадишоран тухса кайнă хыççăн хуларан çурçĕр енче хаярăн çапăçаççĕ. Могадишо патĕнчи çапăçусем çинчен Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: англичансем 3 пин итальянеца тыткăна илнĕ. Хулана туртса илнĕ чухне англичансене хирĕç кĕрешекенсем пулман. Каялла чакса пыракан Итали чăçĕсене хупăрласа илес тĕлĕшпе пуçласа янă операцисем малаллах сарăлса пыраççĕ.

Эритрейăра, Керен районĕнче, Итали сводкинче калана тăрăх, Итали артиллерийĕн активлăхĕ палăрать. Рейтер агентствин Хартумри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Çурçĕр енчен Керен çинелле наступлени туса пыракан англичансен войскисем Келамета туртса илнĕ. (Керенран çурçĕр еннелле 30 миляра), унта вĕсене хирĕç тăраканскем пулман. Кунсăр пуçне, Англи войскисем противник чăçĕсем пăраха кайнă Накфуна туртса илнĕ. Çапла вара, февралĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа Англи войскисем Келамета çити 200 миля тăршшĕ çул тунă. Англин Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш вăйĕсен командованийĕ кăларнă коммюникере калана тăрăх, Англи авиацийĕ Италин Керенри войскисем çине бомбăсем пырса пăрахнă, Ассаб çине пырса талăннă. Кунсăр пуçне, Массауа çывăхĕнчи çар объекчĕсемпе Аваш станцийĕ патĕнчи (Аддис-Абеба çывăхнелле) чугунçул кĕперĕ çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Çурçĕр Африкăра пысăк мар çапăçусем пыраççĕ. Итали войскисем, тенĕ Итали сводкинче, Куфра тата Джарабуб оазисĕсен районĕнче англичансен атакисене сирсе янă. Англин мотомеханизированнăй вăйĕсен малти чăçĕсем, тенĕ Англин Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ кăларнă коммюникере, Эль-Агеилран хĕвеланăç енчи районра Германи войскисен бронетанковăй группине тĕл пулнă. Çапăçура нимĕçсене каялла хăваласа янă. Италипе Германи самолечĕсем англичансен бронетанковăй чăçĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ.

Вăтаçĕр тинĕсĕн районĕнче пысăк çапăçусемех пулман. Германи самолечĕсем Мальта çине пырса тапăннă. Америкăри «Нейшенл Бродкастинг Компани» радиостанцийĕн Афины хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: англичансем Италин Казо утравне йышăннă. (Казо — Додеканеа утравĕсен группине кĕрекен утрав, Крит утравĕ çывăхĕнче).

Албанире темиçе кун хушши ĕпĕ начар çанталăк тăрать. Айлăмсенче çăмăр çăвать, тусем çинче — юрлă çил-тăман. Çакă вăл вăрçă операцийĕсене чăрмантарать кăна мар, çапăçакан енсен войскисене куçса çӳреме тата вĕсем валли кирлĕ япаласем тăратма та йывăрлатать. Февралĕн 27-мĕшĕнче фронтра самаях лăпкă тăнă. Итали çарĕн верховнăй командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, «Греци фронтĕнче нимĕнле пысăк ĕçсемех те пулман». Югославири «Време» хаçатăн Афины хулинчи корреспонденчĕ çапла çырать: Тепеленепе Островице тăвĕн районĕнче противниксем пĕр-пĕрин çине артиллерирен персе тăнă. Икĕ енĕн авиацийĕ те пысăк ĕçсемех туман. Итали самолечĕсем Эгейски тинĕсре грексен пĕр утравĕ çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Англи фронтĕнче Германи хĕçпăталлă вăйĕсен активлăхĕ палăрать. Германи командованийĕн сводкинче çапла калана: февралĕн 27-мĕшĕнче Германи бомбардировщикĕсен соединенийĕсем Кăнтăр тата Кăнтăр-Хĕвелтухăç Англири çар ĕçĕшĕн кирлĕ паха объектсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. 6 аэродромра противникăн нумай самолечĕсене пĕтерсе тăхнă. Тинĕс çинче Германи подводнăй лодкисемпе самолечĕсен активлă операцийĕсем сарăлса пыраççĕ. Англин суту-илӳ тумалли чылай пароходĕсене путарни тата сиен кӳни çинчен пĕлтереççĕ.

Ыран февралĕн 27-мĕш тенĕ чух çĕрле Çурçĕр Франципе вырнаçса тăракан авиабазăсем çине пырса тапăннă хыççăн, Англи авиацийĕ çĕнĕ атакăсем туман. Рейтер агентстви Англи авиацийĕ ыран февралĕн 27-мĕш тенĕ чух çĕрле Кельн çине пырса тапăнни çинчен çапла пĕлтерет: Англи самолечĕсем хула çине çĕрле икĕ сехет çурăра бомбăсем пырса пăрахнă. Самолетсен пирвайхи отрячĕсем вут чĕртсе яракан çĕршер бомбăсем пăрахнă, çакăн хыççăн складсемпе промышленноçлă предприятисем çине фугаслă пысăк бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тивнипе Рейн çыранĕнчи нефть склачĕсем çунма пуçланă. Вăйлă взрывсем пулнă.

Февралĕн 28-мĕш. (ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

(Февралĕн 21-мĕшпе 28-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Иртнĕ эрне хушшинче Центральнăй Китайри фронтăн участокĕсенче пысăк мар çапăçусем пулса иртнĕ. Хэнань провинцийĕн кăнтăр пайĕнче февралĕн пĕрремĕш çур уйăхĕнче лăпкă тăнă хыççăн, Синьянран çурçĕр енчи районра, Бэйпин—Ханькоу чугунçулĕ çинче çапăçусем çĕнĕрен пуçланнă. Японецсен чугунçул тăрăх вырнаçса тăракан гарнизонĕсеке хирĕç атакăсем тунă Китай войскисем чылай пункт-сене туртса илнĕ. Китай войскисем çавăн пекех тата Синьянран кăнтăр енче, Люцзяцай районĕнче çапăçаççĕ.

Февралĕн 18-мĕшĕнче Хубэй провинцийĕн кăнтăр пайĕнче Япони войскисем Шаши хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăç тата кăнтăр-хĕвеланăç еннелле наступлени тума пуçланă. Февралĕн 19-мĕшĕнче контратака туса, Китай войскисем японецсене Шаши патнелле каялла хăваласа янă. Шаши районĕнче çапăçусем пыраççĕ.

Февралĕн 19-мĕшпе 22-мĕш хушшинче Хубэй провинцийĕн кăнтăр-хĕвелгухăç пайĕнче çапăçусем Туншань хулинчен кăнтăр енче пынă.

Февралĕн 28-мĕш. (ТАСС).

Çурçĕр Китайра Китай войскисем Япони войскисен тылĕнче активлăн кĕрешеççĕ. Шаньдун провинцийĕн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче, Ичжоупа Цзюйсянь хушшинчи шоссе çинче çапăçусем пынă. Çак районра Китай войскисем японецсен обозĕсене хирĕç ăнăçлă атакăсем туйă. Шаньси провинцийĕн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче, Цзечжоу хули патĕнчен хĕвелтухăç тата кăнтăр-хĕвелтухăç енче çав-çавах çапăçусем пыраççĕ.

Суйюань провинцинчи Улашань тăвĕсен районĕнче çапăçусем пынă. Çапăçусем хăйсеммĕн ăнăççăр пулнă хыççăн, Япони войскисем Баотоу еннелле чакнă (Бейпин—Суйюань чугунçулĕн вĕçĕнчи пункт). Баотоуран кăнтăр енче, Хуанхэ юханшывĕн кăнтăр сыранĕ çинче çапăçусем пынă.

Кăнтăр Китайра, Кантонран кăнтăр-хĕвелтухăç енчи районра, Китай войскисем японецсене Самшуй хули патнелле хăваласа янă. Фронтăн çак участокĕнче Япони войскисем оборона çине куçнă. Укреплением тума пуçланă.

Февралĕн 28-мĕш. (ТАСС).

Испани королĕ пулнă Альфонс XIII вилнĕ

РИМ, февралĕн 28-мĕш. (ТАСС). Стефани агентстви çапла пĕлтерет: паян Римра Испани королĕ пулчă Альфонс XIII вилнĕ. Ана 1931 çулта Испанире республика туса хунă чухне престол çинчен сирпĕтсе пăрахнă пулнă.

УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: Çĕрпӳ районĕнчи «Ĕмĕт» колхоз счетоводĕ Н. Н. Скуратов юлташ, вăл 1940 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулса выставка свидетельствине илнĕ.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

„Нарспи“— сцена çинче

«Сунтал» журналăн 1-мĕш номерĕнче В. Алагерпа А. Кăлган К. В. Ивановăн вилĕмсĕр поэми тăрăх çырнă «Нарспи» пьеса пичетленсе тухрĕ. Çак пьеса тухсанах, унпа пур профессиллĕ театрсем те тата колхозсемпе предприятиесем те интереслемме тытăнчĕç.

Чăвашсен Государство Академиллĕ Театрĕнче «Нарспи» пьесăна лартма хатĕрленсе çитнĕпе пĕрех. Пьесăна режиссер Л. Н. Родионов лартать, декорацисемпе костюмсен эскизĕсене художник Юрий Зайцев тунă. Нарспи рольне А. Долговăпа М. Иванова выляççĕ, Сетнер рольне — А. Ургалкин, Михетер — Медиков, Тăхтаман — Молодов. Премьера çак уйăхăн 10—12-мĕш числисенче пулать.

Академиллĕ театрсăр пуçне, «Нарспи» пьесăна Комсомольскри тата Етĕрнери колхоз театрĕсем лартма хатĕрленеççĕ. Ку театрсенче премьера (пирвайхи спектакльсем) март уйăхĕн юлашки кунĕсенче пулмалла.

Искусство ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Управленийĕ юлашки вăхăтра драмкружоксенчен кулленех вунпар çырусем илсе тăрать. Пур çĕртен те «Нарспи» пьесăна лартма ирĕк ыйтаççĕ. Çырусем Чăваш республикинчи драмкружоксенчен çеç мар, Тутар республикинчен те, Башкир республикинчен те, Куйбышев облаçĕнчен те, Çĕпĕртен те килеççĕ. Хăшпĕр çырусем айне вунпаран алă пуснă. «Нарспи» пьесăна лартма ирĕк ыйтасшăн пурте хăйсем Алагерпа Кăлганăн пьесине мĕнле юратса вулани, ăна пур вăйран тăрăшса лартма ĕмĕтленни çинчен пĕлтереççĕ.

Л. А—в.

„Айдар“ пьесăна лартса пачĕç

ШАХАСАН. Энтриялĕнчи «Герой» колхозри драмкружок хăйĕн ĕçне çулсеренех лайăхлатса пырать. Çавăн пекех кружок членĕсен йышĕ те ӳсрĕ. Халь унта драмкружок членĕсем 27 çынна çитрĕç.

Çак кунсенче драмкружок район центрне килсе «Айдар» пьесăна лартса пачĕ. Çак спектакле курма 500 çын ытла пухăннă. Курма пынисем кружок пултарулăхне ырларĕç. Уйрăмăнах Л. Прокопьев, Евлампьев, Петров, Сиворова юлташсем хăйсен ролĕсене лайăх выляса пачĕç.

ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕ çак кунсенче СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1941 çулти январĕн 17-мĕшĕнче «Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн вăрман хатĕрлевĕсенче çуран тата лашапа ĕçлемелли тӳлевлĕ повинность тăвасси çинчен» йышăннă постановленине Вăрнар районĕнче пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен райсовет исполком председателĕн Гаврилов тата леспромхоз директорĕн Сазонов юлташсен доклачĕсене итленĕ. Совнарком Вăрнар районĕ вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе паян заданине çавтери начар пурнăçласа пынинне палăртнă.

Февралĕн 25-мĕш тĕлне Вăрнар районĕ тăрăх квартал планне касса хатĕрлессине 36 процент, турттарассине 24 процент тата кирлĕ пункта турттарса кăларассипе 21 процент çеç тултарнă.

Райсовет исполкомĕ вăрман хатĕрлес плана тултарас ĕç çине ответсăр пăхнă, государство планне тултарма кирлĕ чухлĕ çынсене çуран тата лашапа вăрман ĕçне ярассине организацилемен. Вăрнар леспромхоз директорĕ Сазонов юлташ вăрман ĕçне пынă çынсене йышăнса вырнаçтарасси тата вĕсем хушшинче ĕçе организацилесси çине çителĕксĕр çаврăнса пăхнă. Производство енĕпе инструктажсем сахал пулнă тата кирлĕ инструментсене вăхăтра хатĕрлемен, çавăн пекех ĕçе начар организацилеменĕ пирки ĕç тухăçлăхĕ çителĕксĕр.

Чăваш АССР Совнаркомĕ, çынсене çуран тата лашапа вăрман ĕçне организацилесе ярасси çине çавăн пек пăхнăшăн, Вăрнар райсовет исполкомĕн председательне Гаврилов юлташа ятласа хăварнă тата вăрман хатĕрлевĕнчи ĕçе çитес кĕске вăхăтрах юсамасан, ăна райсовет исполком председателĕнчен чĕнсе илсе суд умĕнче ответ тыттарас пирки ыйту лартмалла пуласси çинчен асăрхаттарнă.

Чăваш АССР Вăрман промышленность Халăх Комиссарне Дубов юлташа Вăрнар леспромхозĕнче вăрман хатĕрлес ĕçе мĕншĕн начар организациленине тĕрĕслесе тухса, айăплисем çине взысканисем хума хушнă.

Вăрнар райсовет исполкомне çынсене государство панă плана срокра тултарма кирлĕ чухлĕ çуран тата лашапа вăрман ĕçне яма, ку ĕçе виçĕ кун хушшинче туса çитерме хушнă.

Вăрманта ĕçлекен бригадăра кашни колхозран правлени уйăрнă ответлă çын пулмалла.

Вăрнар райсовет исполкомне леспромхоз директорĕпе пĕрле март уйăхĕ валли вăрман хатĕрлес тата турттарас енĕпе çирĕп график туса, çав графика кашни кунах тултарса пыма хушнă. Вăл графика тунă чухне январь—февраль уйăхĕсенче плана тултармасăр юлнисене йăлтах шута илмелле, вĕсене пĕтĕмпех тултармалла.

Вăрнар леспромхоз директорне Сазонов юлташа вăрман ĕçĕнчи рабочисем хушшинче инструктажа лайăхлатма, вĕсене тĕрĕс вырнаçтарса туха ĕç тухăçлăхне ӳстерме хушнă. Чăн малтан строительствăра кирлĕ йывăç сортименчĕсене турттарса кăларасси çине çаврăнса пăхмалла. Çавăнпа та лашапа ĕçлекенсене чăн малтан çав сортиментсене турттарнă çĕре ямалла. Ку ĕçре леспромхозăн хăйĕн транспорчĕне те туллин усă курмалла.

Вăрман касакансенчен тата турттаракансенчен касса хатĕрленĕ е турттарса тухнă йывăçсене вăхăтра йышăнассине организацилемелле.

Совнарком райсовет исполкомĕн председательне Гаврилов тата леспромхоз директорне Сазонов юлташсене çак постановленине пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен мартăн 10-мĕшĕнче Совнаркома пĕлтерме хушнă.

Ăмăртăва 19 команда хутшăнать

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Осоавиахимовецсен Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 23 çул тултарнă ятпа пыракан ăмăртăвне мĕнпурĕ 19 команда хутшăнать. Халĕ кашни командăрах хатĕрленӳ ĕçĕсем пыраççĕ. Районри судейски коллеги те хăйĕн ĕçне туса çитернĕ. Дистанцине виссе паллăсем лартса тухнă тата чăрмавсем те туса хатĕрленĕ.

Ăмăртăва «Большевик», «Прогресс», «Янмурзино» колхозсенчи Осоавиахим организацисем лайăх хатĕрленсе пыраççĕ. Вĕсем чăрмавсем урлă йĕлтĕрсемпе каçса гранатăсем ывăтма, противогазсемпе çӳреме вĕренсе çитнĕ.

П. МАЙОРОВ.

Сухан сутма хатĕрленеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. «Волга» колхоз кăçалхипе иккĕмĕш çул ĕнтĕ теплицăра ир пулакан пахча-çимĕçсем лартса тăвать. Теплица пысăккăшĕ—76 квадратлă метр. Унта кăçал пĕтĕмпех сухан акнă. Халĕ сухан çеçки 10—15 сантиметр çӳлĕш ӳснĕ те ĕнтĕ. Çак кунсенче Çĕмĕрлери столовăйсенче ешĕл симĕс сухан пулать. Малтанлăха пĕр центнера яхăн илсе пыраççĕ.

Т. НИКИТИН.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ПЛАН

лекций, консультаций и товарищеских собеседований, проводимых парткабинетом Чебоксарского горкома ВКП(б) в марте м-це 1941 г.

Числа м-ца	Темы лекций, консультаций и товарищеских собеседований	Для кого	Лектор
4/III	Международный коммунистический женский день	Для агитаторов и докладчиков	Орленко.
5/III	Борьба материализма и идеализма в XVI.I веке.	Для слушателей цикла лекций по философии.	Сафрошкин.
6/III	О коммунистическом воспитании детей.	Публичная лекция.	Бокарев
8/III	Заработная плата и эксплоатация рабочего класса при капитализме.	Для слушателей цикла лекций по политэкономии	Филимонова.
12/III	Работа Ленина „Материализм и эмпириокритицизм“ и защита теоретических основ марксистской партии (первая лекция).	Для слушателей цикла лекций по истории ВКП(б).	Суслов
13/III	День международной организации помощи борцам революции.	Для агитаторов и докладчиков.	Александров
15/III	Немецкая классическая философия (первая лекция).	Для слушателей цикла лекций по философии.	Сафрошкин.
19/III	Работа Ленина „Материализм и эмпириокритицизм“) и защита теоретических основ марксистской партии (вторая лекция).	Для слушателей цикла лекций по истории ВКП(б).	Суслов
22/III	Капиталистическое воспроизводство и всеобщий закон капиталистического накопления.	Для слушателей цикла лекций по истории ВКП(б).	Железнов
26/III	Немецкая классическая философия (вторая лекция).	Для слушателей цикла лекций по философии.	Сафрошкин.
28/III	Задача догнать и перегнать главнейшие капиталистические страны в экономическом отношении.	Публичная лекция.	Романова.
29/III	Распределение прибавочной стоимости между различными группами капиталистов.	Для слушателей цикла лекций по политэкономии.	Анисимова.

Групповые консультации, товарищеские собеседования

4/III	Товарищеское собеседование с секретарями первичных парторганизаций закончившими изучение „Краткого курса истории ВКП(б)“, по книге Ленина „Что делать?“	Орленко.
10/III	Групповая консультация с изучающими „Краткий курс истории ВКП(б)“ на тему: „Диалектический материализм—мировоззрение марксистско-ленинской партии“.	Магуськин.
17/III	Групповая консультация с изучающими „Краткий курс истории ВКП(б)“ по книге Ленина „Две тактики социал-демократии в демократической революции“.	Орленко
5/III—25/III	Индивидуальные собеседования с секретарями первичных парторганизаций, предприятий и артелей по изучению „Краткого курса истории ВКП(б)“ и по материалам XVIII партийной конференции.	Орленко Магуськин Смирнов
1/III—15/III	Индивидуальные собеседования с секретарями наркоматских первичных комсомольских организаций по изучению „Краткого курса истории ВКП(б)“.	Орленко Магуськин Смирнов.

Индивидуальные консультации

По материалам XVIII партийной конференции, по международному положению и по истории ВКП(б)

Ежедневно, кроме общевыходных дней, с 9 до 22 часов. Консультанты т.т. Магуськин и Орленко.

По истории СССР

10, 17, 24 числа с 20 до 22 часов. Консультант т. Григорьев М. Г

По политэкономии

13, 26 числа с 20 до 22 часов. Консультант т. Филимонова.

По диалектическому и историческому материализму

11, 14, 25 числа с 20 до 22 часов. Консультант т. Орленко.

По антирелигиозным вопросам

4, 12, 21 числа с 20 до 22 часов. Консультанты т.т. Цветков, Романов, Хаустов,

Горотдел ГК ВКП(б).

Радиопостановка „Чакка“ çинчен

Чăваш халăх поэчĕн Семен Васильевич Эльгерĕн «Хĕнхур айĕнче» поэми тăрăх Ф. Трофимов тунă пьесăна пирĕн радио итлекен юлташсем нумайранпа ĕнтĕ радиопа пăрасса кĕтетчĕç. Чăнах та, Чăвашсен Государство Академи Театрĕнче лартакан «Чакка» пьеса пĕтĕм масса кăмăлне кайрĕ. Л. Семенов артист тунă Чакка образĕ, пьесăри ватă юрăç Тевенеш рольне РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Б. Алексеев выляннисем тата нумай образсем те асра юласçĕ.

...Кушлавăш çамрăкĕсем вăйăа тухнă. Вĕсен уçă сассисем пĕтĕм ял тăрăх янăраса каяççĕ. Çав вăхăтра ватă юрăç Тевенеш килсе тухать. Вăл — кĕсленĕ. Çамрăксем пурте шăп пулса ватă юрăç юрланине итлеме тытăнаççĕ. Мĕнтери илемлĕ унăн юрри, анчах ментери хурлăхлă. Вăл юрă кăкăра хăпартать. Ватă юрăç хăйĕн юрринче ĕлĕк-авал Кушлавăш никамшăн асра тăман ял пулнине, анчах кайран «усал пуçлăхсем кунти кĕтессе те çитме пуçланине» каласа кăтартать. Шăп. Эфирта ватă юрăç юрри янăрать. Сасартăк аякра шăнкăрав сассисем илтĕнсе каяççĕ. Ку — кантуртан бурмиспа тиек килеççĕ иккен. Ватă юрăç юрри пат татăлать.

— Татах çитрĕç, — тет вăл чунне тăвăнтарса.

— Тевенеш мучи, ял кĕслӳне, каяр кунтан, пĕтереймен юрăна юрлăпăр ӳлĕмрен, — теççĕ ана хĕрсем.

Тискер бурмис пĕтĕм ял сыннисене густарать. Вăл Чаккина та куланай тӳлеймеллĕ вилес вĕçне çитичченех хĕнеттерет. Акă Чакка килте. Унăн суранĕсем ыратаççĕ. Туллашнă ăшчикне вăл юрăпа пусарать.

Урать çилĕ, тулать—вăрман кашлать,
Тата темскер çăвасси пур,
Хĕсет саккунĕ, хĕсет—халăх макрать,
Тата темскер курасси пур.

Çак вăхăтра ватă юрăç Тевенеш килсе кĕрет.

— Чакка ачам, — тет вăл, — эс халь тӳсекен пур инкек-асап мĕнтен пулнине эп тĕппех курап... Салтакра пулман пулсан эс чирлес çукчĕ. Сывă пулнă пулсан, куланай та çапла çултан çул юлса пырас çукчĕ. Патак та лекместчĕ халĕ ун пирки... Салтахне кайрăн каяс çук çĕртемех. Эп лайăх пĕлтĕм ку вăрттăн ĕçе: пĕтерчĕ сана хамăр ял-йышах, Алапит анчăк турĕ ку ĕçе...

Ялти асаплă пурнăçа тӳсеймесĕр Чакка Пахомка ушкăнне тухса каять. Анчах вĕсене тӳре-шара йыттисем сыхласçĕ. Вĕсен ирсĕр ĕçне пула Чакка хăйĕн юратнă арăмне ĕмĕрлĕхех сухатать. Юратнă ывăлне—Илюша ирĕксĕрех пăрахса хăварса хăй Атăл çине бурлак пулса ĕçлеме каять. Çирĕм çул çӳрет вăл бурлакра. Ку тĕлеунăн ялта юратнă ывăлĕ ӳссе çитнĕ. Вăл та çынсем патĕнче ĕçлесе пурăнать. Çирĕм çултан Чакка хăй ывăлне таçта Атăл хĕрĕнче тĕл пулать. Чакка савăнать, тарăхать, анчах унăн вăйĕ чакнă ĕнтĕ, вăл сывалмалла марах чирлесе ӳкнĕ. Таçта инçетре бурлаксен хурлăхлă юррисем янăраççĕ.

— Пыратăп... эпĕ те пыратăп, — тесе кăшкăрать Илюш бурлаксен юррине хирĕç. Илюш Атăл хĕрнелле чупса анса кайрĕ. Бурлаксен юрри тата инçете кайса илтĕнет.

Хула сум шăпах. Чакка тăпри — Хĕрессĕр тăпра юлать хурланса.
Таçта аякра кĕрлет аслати,
Патрах мăн Атăл выртать шавласа.

Çак иртнĕ пурнăçа эфирта пĕтĕм анлăшĕпе ĕнентерӳллĕн кăтартса парасси питĕ ответлă ĕç пулса тăрать. Эпир пурте пĕлетпĕр, радион унăн хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур, вăл сцена пек мар, унта куçпа курма çук. Анчах Чăвашсен Государство Академи Театрĕн артисчĕсем çак задачăна ăнăçлăн татса пачĕç темелле (постановщикĕ Л. Родионов). Уйрăмах Чакка (артист Л. Семенов), Тевенеш (арт. Б. Алексеев), бурмис (арт. П. Медиков), Алапит (арт. Г. Фадеев), Илюш (арт. А. Ургалкин), Пахомка (арт. И. Молодов) ролĕсем кăмăла кайрĕç. Анчах, çакăнпа пĕрлех, ситменлĕхсене те кăтартмалла. Уйрăм детальсене яруçăн кăтартса паманни, вĕсем асра юлмасăр çухални, массăллă сценăсене лайăх тăваймамни постановка пахалăхне чылай чакарчĕ. Массăллă сценăсем ытла шавлă тухрĕç, çавăнпа эфирта ним ăнланмалла мар выраннисем чылай палăрчĕç (сăмахран, Алапит патĕнчи ĕçкĕ; Пахомка килни), тав хытă пулнипе уйрăм сăмахсем илтĕнмесĕр тăчĕç. Ку вăл паянхи ситменлĕх кăна мар, кăна уйрăмах шута илни кирлĕ.

Кăштах передачăри дисциплина çинчен каламалла. Сăмахран, иккĕмĕш картина хыççăн диктор пĕлтермесĕрех пьесăна малалла пама тытăнчĕç. Ку вăл итлекенсене ăнланма йывăр туса хучĕ. Пьесăри ведущий ролĕ çителĕксĕр пахалăхлă пулчĕ.

Пĕтĕмпе илсен, постановка лайăх пулчĕ, «Чакка» пьеса эфирта татах та янăрасса шикмалла.

В. ЮМАНКА.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0.67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн —4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0,88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн—6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0,85, издательство конторин—023.

НТ 2681.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 146, Ф. Б. 58×84 п. л.